Чебоксарская
Ц. Б. им. Горько
0

1937 ДЕКАБĔР 13 ТУНТИКУН
285 (4797)-мĕш №

Пĕр №-рĕ 10 пус. 19-мĕш çул тухать

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ЧĂВАШ КОММУНĔ

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн, Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ

Редакципе кантур адресĕ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактăрăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

И. В. Сталин йулташ сăмахĕ

Мускав хулинчи Сталинский суйлав округĕнчи суйлавçăсен суйлав умĕнхи пухувĕнче, Пысăк Театрта, 1937 ç. декабĕрĕн 11-мĕшĕнче каланă

ПРЕДСЕДАТĔЛ. Сăмах пирĕн кандидата Сталин йулташа паратăп.

Сталин йулташ трибунă çине тухнине суйлавçăсем тăвăллăн оваци туса йышăнаççĕ, оваци темиçе минута пырать. Пысăк Театр залĕнчи пĕтĕм халăх ура çине тăрса Сталин йулташа саламлать. Залран вĕçĕмсĕр сасăсем илтĕнеççĕ: „Сывă пултăр аслă Сталин, урра!", „Тĕнчери чи демократилĕ советлă Конституци тăвакан Сталин йулташа урра!", „Сывă пултăр пĕтĕм тĕнчери пусмăрта пурăнакан халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташ, урра!"

Сталин. Йулташсем, тĕрĕссине каласан, манăн тухса калас шухăш çукчĕ, анчах пирĕн хисеплĕ Никита Сергеевич, калас пулать кунта, пухува, мана вăйпах илсе килчĕ: кала, тет, лайăх сăмах. Мĕн çинчен каламала, мĕнле сăмах именно? Суйлав умĕн мĕн каламаллисене ĕнтĕ пурне те пирĕн йертсе пыракан йулташсем—Калинин, Молотов, Ворошилов, Каганович, Иежов, тата ытти нумай ответлă йулташсем хăйсен сăмахĕсенче каланă, темиçе хут та каланă. Çав сăмахсем çумне тата мĕн хушса калама пулать-ха?

Суйлав кампанин хăшпĕр ыйтăвĕсем пирки ăнлантарса пани кирлĕ, теççĕ. Мĕнле ăнлантарусем, мĕнле ыйтусем тăрăх? Мĕн ăнлантарма кирлине пурне те ĕнтĕ большевиксен партийĕ, комсомол, Пĕтĕм Союзри Професçилĕ Союзсен Тĕп Совечĕ, Осоавиахим, физкультура ĕçĕсен Комитечĕ чĕнсе каланисенче ăнлантарса панă, темиçе хут та ăнлантарса панă.

Çав ăнлантарусем çумне тата мĕн хушса калама пулать-ха?

Паллах, пурин çинчен те, анчах нимĕн çинчен те каламан пĕрпĕр çăмăл сăмах калама пулĕччĕ ĕнтĕ. **(Кулаççĕ).** Тен, çавăн пек сăмах итлесе ларакансене астарса култарнă та пулĕччĕ. Калаççĕ, çавăн йышши сăмах маçтăрĕсем лере, капиталисăмла çĕршывсенче, çеç мар, пирĕн патăрта та, Совет Союзĕнче, пур, теççĕ. **(Кулаççĕ, алă çупаççĕ).** Анчах, пĕрремĕшĕнчен, епĕ çавăн пек сăмахсем калама маçтăр мар. Иккĕмĕшĕнчен, пирĕн, большевиксен, пурин те, сăмах калашле, „çăвар тулли ĕç" чухне астарса култармалли ĕçсемпе хăтланма кирлĕ-ши халĕ? Кирлĕ мар пулĕ, тесе шутлатăп.

Паллă, çавăн пек условисенче лайăх сăмахах калаймăп.

Çапах та, трибунă çине тухрăм пулсан, манăн, паллах, тем пулсан та, мĕн те пулин каласах пулать. **(Шавлăн алă çупаççĕ).**

Чăн малтан епĕ суйлавçăсене вĕсем мана шаннăшăн **(алă çупаççĕ)** тав тăваспăн. **(Алă çупаççĕ).**

Мана депутата суйлама кандидата тăратрĕç, совет столицинчи Сталинский суйлав округ комиççи депутата суйлама кандидат шутне хурса регистрацилерĕ. Çакă вăл, йулташсем, пысăк шанăç. Есĕр большевиксен партине шаннăшăн,—епĕ вăл парти членĕ,—тата мана хама, çав партин представителне, шаннăшăн сире тав тума ирĕк пама ыйтатăп. **(Шавлăн алă çупаççĕ).**

Шанăç хуни мĕне пĕлтернине епĕ пĕлетĕп. Вăл, паллах, ман çине çĕнĕ, тата ытларах обйазăннăçсем хурать, апла пулсан, çĕнĕ, тата ытларах ответлăх хурать. Мĕн ĕнте, пирĕн, большевиксен, ответлăхран пăрăнас йăла çук. Епĕ ăна хавасланасах йышăнатăп. **(Нумайччен тăвăллăн алă çупаççĕ).** ■

Хам йенчен епĕ сире, йулташсем, есĕр Сталин йулташа хăйулăнах шанса тăма пултарăраттăр тесе шантараспăн. **(Тăвăллăн нумайччен оваци тăваççĕ. Залра „Епĕр ĕнтĕ пурте Сталин хыççăн пыратпăр!" тенĕ сасăсем илтĕнеççĕ).** Есĕр, Сталин йулташ халăх умĕнчи **(алă çупаççĕ)**, рабочи клас умĕнчи **(алă çупаççĕ)**, хресченсем умĕнчи **(алă çупаççĕ)**, интелигенци умĕнчи **(алă çупаççĕ)** хăйĕн парăмне татма пĕлĕ тесе шанма пултараттăр. **(Алă çупаççĕ).**

Малала, епĕ, йулташсем, сире пĕтĕм халăхăн çитес уйавĕ йачĕпе, Совет Союзĕн Аслă Советне суйламалли кун йачĕпе саламласпăн. **(Шавлăн алă çупаççĕ).** Çитес суйлавсем вĕсем, йулташсем, ахаль суйлавсем çеç мар. Вăл чăннипех—пирĕн рабочисен, пирĕн хресченсен, пирĕн интеллигенцин пĕтĕм халăх уйавĕ. **(Тăвăллăн алă çупаççĕ).** Тĕнчере çавăн пек чăннипех ирĕклĕ, чăннипех демократилĕ суйлавсем пихăçан та пулман-ха, нихăçан та! Истори ун пек пример урăх пĕлмест. **(Алă çупаççĕ).** Ĕç кунта пирĕн суйлавсем пурне те тивĕç, пăртан, вăрттăн, тÿррĕмĕн пуласси мар,—ку хăйех те ĕнтĕ пит те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Ĕç кунта пирĕн пурне те тивĕç суйлăвсене тĕнчери кирек хăш çĕршыври суйлавсемпе танлаштарсан та, вĕсенчен ытларах ирĕклĕ, ытларах демократилĕ пулассинче.

Пурне те тивĕç суйлавсем хăйшĕр наштамлăсемла, демократилĕ текен, çĕршывсенче те пулса иртеççĕ, унта та пулаççĕ. Анчах унта суйлавсем мĕнле ларутăрура иртеççĕ-ха? Суйлавсем унта класлă çапăнусен лару-тăрувĕнче, класлă кирĕçÿсен лару-тăрувĕнче, капиталисем, помещиксем, банкирсем, капиталисăмăн ытти акулисем суйлавçăсене хĕснĕ лару-тăрусенче пулса иртеççĕ. Çавăн пек суйлавсене, вĕсем пурне те тивĕç, пĕртан, вăрттăн, тÿррĕмĕш пулин те, пĕтĕмпех ирĕклĕ, пĕтĕмпех демократилĕ суйлавсем теме çук.

Пирĕн патăрта, пирĕн çĕршывра, йалтах урăхла, суйлавсем пачах урăх лару-тăрура иртеççĕ. Пирĕн патăрта капиталиссем çук, помещиксем çук, çапла ĕнтĕ, пурлăхлă классем пурлăхсăррисене чĕсни çук. Пирĕн патăрта суйлавсем рабочисем, хресченсем, интеллигенци пĕр пулса ĕçленĕ лару-тăрура, вĕсем пĕр-пĕрне шанса тăнă ларутăрура, епĕ калăттăм, пĕрпĕрине туслă пурăнакан лару-тăрура пулса иртеççĕ, мĕншĕн тесен пирĕн патăрта капиталиссем çук, помещиксем çук, експлоатаци çук, халăх ирĕкне пăсас тесе, хĕсме, паллах, никам та çук.

Акă ĕнтĕ мĕншĕн пирĕн суйлавсем пĕтĕм тĕнчере йĕртен-пĕр чăннипех ирĕклĕ, чăннипех демократилĕ суйлавсем пулса тăраççĕ. **(Шавлăн алă çупаççĕ).**

Çавăн пек ирĕклĕ те чăннипех демократилĕ суйлавсем социалисăмлă йĕркесем çĕнтерсе илнĕ никĕс çинче кăна, çакăн пек никĕс çинче кăна: пирĕн патăрта социалисăма просто çеç туса пымаççĕ, вăл ĕнтĕ пурнăç йĕркине, халăхăн куллентхи пурнăç йĕркине кĕнĕ никĕс çинче кăна, çуралса тухма пултарнă.

Пĕр вунă çул каялла пирĕн патăрта социалисăм тума пулать-и йе çук-и тесе тавлашма пулнă та пулĕччĕ. Халĕ ĕнтĕ ку тавлашулă ыйту мар. Халĕ ĕнтĕ кÿ фактсен ыйтувĕ, чĕрĕ пурнăç ыйтувĕ, халăхăн пĕтĕм пурнăçне витĕр кĕнĕ йăла ыйтувĕ. Пирĕн фабрикăсемпе заводсенче капиталиссемсĕр ĕçлеççĕ. Ĕçе халăх хушшинчен тухнă çынсем йертсе пыраççĕ. Çавна калаççĕ те ĕнтĕ пирĕн патăрта ĕçре пулса тăнă социалисăм тесе. Пирĕн уйхирсенче çĕр ĕççыннисем помещиксемсĕр, кулаксемсĕр ĕçлеççĕ. Ĕçе халăх хушшинчен тухнă çынсем йертсе пыраççĕ. Çавна калаççĕ те ĕнтĕ пирĕн патăрта пурнăç йĕркинчи социалисăм тесе, çавна калаççĕ те ĕнтĕ пирĕн патăрта ирĕклĕ, социалисăмлă пурнăç тесе.

Акă çак никĕс çинче пулса тăчĕç те ĕнтĕ пирĕн патăрта çĕнĕ, чăннипех ирĕклĕ те чăннипех демократилĕ суйлавсем, нуи пек суйлавсем этемлĕх историнче урăх пулман.

Çакăн хыççăн йепле-ха ĕнтĕ сире пĕтĕм халăхăн савăнăçлă уйавĕ йачĕпе, Совет Союзĕн Аслă Совечĕн суйлавĕ йачĕпе саламлас мар! **(Пĕтĕм зал тăвăллă оваци тăвать).**

Малала епĕ, йулташсем, сире канаш парасшăн, депутата суйлама тăратнă кандидат хăйĕн суйлавçисене паракан канаша, парасшăн. Капиталисăмла çĕршывсене илсен, унта депутатсемпе суйлавçăсем хушшинче хăшпĕр хăй-йеверлĕ çыхăнусем, епĕ калăттăм, чылайах тĕлĕнтерекен çыхăнусем пулаççĕ. Суйлавсем пынă хушăра депутатсем суйлавçăсем умĕнче ырăулма тăрăшаççĕ, вĕсем умĕнче йăпăлтатаççĕ, суйлавçăсен интересĕсене хÿтлеме тупатăваççĕ, куйшпех тĕрлĕрен сăмахсем параççĕ. Депутатсем пĕтĕмпех суйлавçăсене пăхăнса тăнă хăйех тухать. Суйлавсем пулса иртсенех, кандидатсем депутатсем пулса тăрсанах—çыхăнусем тĕпренех улшăнаççĕ. Депутатсем суйлавçăсене пăхăнса тăрас вырăнне, пĕтĕмпех пăхăнми пулса тăраççĕ.

Тăвата йе пилĕк çул хушшинче, урăхла каласан, çĕнĕ суйлавсем пуличченех, депутатсем халăхран, хăйсен суйлавçисенчен пĕтĕмпех ирĕклĕн пурнаççĕ, нимĕн чухлĕ те пăхăнмаççĕ. Вăл пĕр лагĕртен тепĕр лагĕре куçма пултарать, вăл тĕрĕс çул çинчен тĕрĕс марри çине куçма пултарать, вăл хăшпĕр кирлĕ мар махинацисене хутшăнса патранса кайма та пултарать, вăл хăйне мĕнле кирлĕ çапла чикĕл-макĕл тума пултарать,—вăл никама пăхăнмаст.

Çавăн пек çыхăнусене йĕркелĕ çыхăнусем тесе шутлама йурать-и? Нийепле те йурамаст, йулташсем. Çав обстойательствăна пирĕн Конституци шута илчĕ те, вăл саккун йышăнчĕ, çав саккун тăрăх суйлавçăсем хăйсен депутачĕсене, вĕсем чейеленме, улталама тытăнсан, вĕсем çулран пăрăнаççĕ пулсан, вĕсем хăйсем халăха, суйлавçăсене пăхăнса тăмалине маннаççĕ пулсан, срукченех чĕнсе илме пултараççĕ.

Ку пит те аван саккун, йулташсем. Депутат çакна пĕлме тивĕç: вăл халăх тарçи, Аслă Совета халăх йанă посланец, унăн хăйне халăх панă наказ тăрăх тытмала. Çулран пăрăнатăн—суйлавçăсен çĕнĕ суйлавсем туса иртерме ыйтма права пур, çулран пăрăннă депутата вара çĕнĕ суйлавра суйламасăр хăварма права пур.*) **(Кулаççĕ, алă çупаççĕ).** Ку пит те аван саккун. Хамăн суйлавçăсене манăн канаш, депутата суйламалли кандидатăн канашĕ çапла: суйлавçăсен çав прави çинчен,—депутата срукченех чĕнсе илмели, хăйсен депутачĕсене асăрхаса тăмали, вĕсене контроль туса пымали тата, вĕсем тĕрĕс çул çинчен пăрăнма шутлаççĕ пулсан, вĕсене хулпуççи çинчен сирсе пăрахмали, çĕнĕ суйлавсем туса иртерме ыйтма права пурри çинчен астуса тăрар. Правителствă çĕнĕ суйлавсем туса иртерме тивĕç. Манăн канаш çапла: çав саккуна астуса тăмала, тата, кирлĕ пулсан, унпа усă курмала.

Йулашкинчен, депутата суйлама тăратнă кандидатăн хăйĕн суйлавçисене тата тепĕр канашĕ. Хăйсен депутачĕсенчен,—мĕн пур пулма пултаракан требованисенчен чи кирлĕреххисене илес пулсан,—мĕн ыйтмала-ха?

Суйлавçăсем, халăх хăйсен депутачĕсенчен çакна ыйтмала: депутатсем хăйсен задачисен çÿлĕшĕнче тăччăр, вĕсем хăйсен ĕçĕнче политикăлă обывательсен картне анса ан ларччăр, вĕсем Ленин сăнарлă политикăлă деятелсен вырăнче тăччăр, вĕсем Ленин пекех йăрăçă та паллă деятелĕсем пулччăр **(алă çупаççĕ)**, вĕсем Ленин пекех кĕрешÿре нимрен хăраман тата халăх тăшманĕсене нимĕн хĕрхенмен çынсем пулччăр **(алă çупаççĕ)**, вĕсем ĕç йăвăрлашма пуçласан, тавраку рăмра мĕнле те пулин хăрушлăх палăрса тухма пуçласан кирек мĕнле хăраса ÿкесрен те, кирек мĕнле хăраса ÿкес пеккинчен те ирĕклĕ пулччăр, вĕсем кирек мĕнле хăраса ÿкес пеккинчен те Ленин пекех ирĕклĕ пулччăр **(алă çупаççĕ)**, кăткăс ыйтусене татса пама çĕрте пур йенлĕ ориентаци тата пĕтĕм плюссемпе минуссене пур йенчен те учота илмелле çĕрте вĕсем Ленин пекех, аслă та васкамасăр тăвакалсем пулччăр **(алă çупаççĕ)**, вĕсем Ленин пекех тĕрĕс те тÿрĕ кăмăллă пулччăр **(алă çупаççĕ)**, вĕсем хăйсен халăхне, ăна Ленин йуратнă пекех, йуратчăр. **(Алă çупаççĕ).**

Депутата суйлама тăратнă кандидатсем пурне те шăпах çавăн пек деятелсем тесе калама пултаратпăр-и епĕр? Пурте çавăн пек деятелсем тесе епĕ каламăттăм. Тĕнчере тĕрлĕрен çынсем пулаççĕ, тĕнчере тĕрлĕрен деятелсем пулаççĕ. Çакăн пек çынсем пур; вĕсем çинчен вĕсем кампе: лайăх-и вăл, йапăх-и вăл, хăйулă-и вăл, хăраçă-и вăл, халăхшăн-и вăл, халăх тăшманĕсемшĕн-и вăл—татса калама май çук çынсем пур. Çавăн пек çынсем пур, çавăн пек деятелсем пур. Ун пек çынсем пирĕн хушăра та, большевиксем хушшинче те пур. Хăвăрах пĕлетĕр, йулташсем, çемйе чăлахсăр мар. **(Кулаççĕ, алă çупаççĕ).** Çакăн пек тĕлли-паллисĕр çынсем çинчен, политикăлă деятелсенчен ытларах политикăлă обывательсене аса илтерекен çынсем çинчен, çавăн пек тĕлли-паллисĕр, татăклăн палăрса çитмен çынсем çинчен аслă вырăс писателĕ Гоголь питех те тĕл каланă: „Çынсем, тет, тĕлли-паллисĕр, вăл та мар, ку та мар, мĕнле çынсем, ăнланса илме çук, хулара та Богдан мар, йалта та Селифан мар". **(Кулаççĕ, алă çупаççĕ).** Çавнашкал тĕлли-паллисĕр çынсемпе деятелсем çинчен халăх хушшинче те çавăн пекех тĕл калаççĕ: „çынни çапла—ни пулă, ни какай" **(пурте кулаççĕ, алă çупаççĕ)**, „турра та çурта мар, усала та турчка мар". **(Пурте кулаççĕ, алă çупаççĕ).**

Депутата суйлама тăратнă кандидатсем хушшинче (епĕ вĕсенчен, паллах, пит те каçару ыйтатăп) тата пирĕн деятелсем хушшинче политикăлă деятелсенчен ытларах политикăлă обывательсене аса илтерекен, хăйсен характерĕпе, хăйсен сăн-сăпачĕпе халăх хушшинче: „турра та çурта мар, усала та турчка мар" текен йышши çынсене аса илтерекен çынсем çук, тесе епĕ шанчăклăнах калама пултараймастăп. **(Кулаççĕ, алă çупаççĕ).**

Епĕ, йулташсем, есĕр хăвăрăн депутатсене тăтăшах хистесе тăрăр, вĕсене хăйсен умĕнче аслă Ленинăн аслă сăнарне тытса тăма тата пур ĕçре те Ленин пек пулма ÿкĕтлĕр, тесе каласшăн. **(Алă çупаççĕ).**

Суйлавçăсен ĕçĕсем суйлавсемпе пĕтмеççĕ. Вĕсем халь суйласа лартнă Аслă Советăн пĕтĕм тапхăрне пыраççĕ. Суйлавçăсене, хăйсен депутачĕсем тĕрĕс çул çинчен пăрăнсан вĕсене срукченех чĕнсе илме права паракан саккун çинчен епĕ каларăм ĕнтĕ. Апла пулсан, суйлавçăсен обйазăннăçĕпе прави çакăнта пулать: вĕсем хăйсен депутачĕсене пĕрмайах контроль туса пычччăр, вĕсене тем пулсан та политикăлă обывательсен картне кайса лармала марри çинчен ÿкĕтлечччĕр, вĕсем—суйлавçăсем хăйсен депутачĕсене аслă Ленин пек пулма вĕрентсе тăччăр. **(Алă çупаççĕ).**

Çавăн пек ĕнтĕ, йулташсем, сире манăн иккĕмĕш канаш, депутата суйлама тăратнă кандидат хăйĕн суйлавçисене паракан канаш. **(Тăвăллăн, нумайччен, хавассăн саламласа алă çупаççĕ. Пурте ура çине тăраççĕ, Сталин йулташ пырса тăнă правителствă ложи йеннелле пăхаççĕ. „Аслă Сталина, урра!", „Сталин йулташа, урра!", „Сывă пултăр Сталин йулташ, урра!", Сывă пултăр пĕрремĕш ленинец—Союз Советне депутата суйлама тăратнă кандидат—Сталин йулташ! Урра!").**

*) Кунта Сталин йулташ „Прокатать на вороных" тесе каланине çапла куçарнă. „Прокатать на вороных" тени вăл ĕлĕкхи шутлĕ халап. Шарсемпе сасăланă чух, хура шарсем баллотировкăна тăракан кандидата хирĕç сасăланине, кандидата суйламаннине пĕлтернĕ.

Редакци.

Сталин йулташ сăмахне итлереç

ШУПАШКАР. Декабĕрĕн 11-мĕш. Калаçакан кино-театртра килхуçи арăмĕсен пухувĕ пулса иртрĕ. 800 çын пухăннă. Пухура А. И. Стецкий йулташ сăмахнĕ итлерĕç. Килхуçи арăмĕсем ăна пысăк хавасăхпа йышăнса илчĕç.

Çак пухурах Сталин йулташ калание радио тăрăх итлерĕç. Залăри çынсем Мускаври Сталински округĕнчи суйлавçăсемпе пĕрлех тăвăллăн алă çупса, „урра" кăшкăрчĕç. Сталин йулташ сăмахĕсем ĕмĕр манми чĕрене кĕрсе йулчĕç.

***

Йалхуçалăх Коммунисла Аслă шкулĕнче вĕренекенсемпе служăшчисем 230 çын пысăк хаваслăхпа халăхсен çулпуçĕн Сталин йулташăн сăмахне итлерĕç. Унăн сăмахĕ пурне те кăмăла кайать, ăнланмала. Уборщица Николайева йулташ çапла каларĕ:

— Сталин—пирĕн ĕмĕрти чăн-чăн чаплă гений.

Черкасова уборшицăн Сталин йулташ сăмахне хăйĕн хватерĕнче хăнасемпе пĕрле итлеме, Сталин йулташа пĕтĕм çĕршывпа пĕрле алă çупма телей пулнă.

**

Шупашкар хулинче, декабĕрĕн 11-мĕшĕнче, фабрик-заводсенчи рабочисем, служăщчисем, инженерла-техникла работниксем, ĕççыннисем Сталин йулташ сăмахне пысăк хаваслăхпа итлерĕç.

Йалхуçалăх институтĕнче, педагогикă институтĕнче вĕренекенсем, спирт заводра, тир-сăран заводĕнче ĕçлекенсем—пурĕ 2000 пин ытла Сталин докладне итленĕ, Вĕсем Мускаври Сталинский Суйлав округĕнчи суйлавçăсемпе пĕрлех Сталин йулташа пысăк кăмăлпа хапăлланса алă çупрĕç.

Сталин йулташăн усă кăмăллă, тÿрĕ, тарăн шухăшлă, ăнланмала сăмахĕ вĕсене çĕнĕ çĕнтерÿсем тума хавхалантарчĕ.

С. Воробйов.

*

Ĕнер каçхине Сталин йулташ докладне Куславкка районĕнче 6972 çын итленĕ. Тĕрлемесре радио тата телефон тăрăх итлессине организациленĕ. Унта 57 вырăнта итленĕ.

М. Т.

Ырă сунса килтĕмĕр

Шупашкар хулинчи 1-мĕш номĕрлĕ суйлав участки. Новайа урамри Киров йачĕпе тăракан шкул. Суйлав бÿллетенĕсен паракан пÿлĕм. Çурçĕр иртни 5 сехет çитнĕ тĕле суйлав участкинче халăх туллийех. Ташă, йура, савăнăç, хаваслăх—пурте пур. Грузин Махирадзе грузи халăхĕн авалхи ташшине шăрантарать. Халăх ăна тăвăллăн алă çупать. Унтах „Сывă пултăр ССР Союзĕнчи халăхсен туслăхĕ!" тенипе „урра" кăшкăрни шкул çуртне йанратса йарать.

75 çула çитнĕ, çÿçĕсем кăвакарнă, аллине туйă тытнă карчăк Пелагейа Тихоновна, пухăннă халăх çине пăхса пуçне тайса илет те: „Сывă-и, йулташсем, ырă сунса килтĕмĕр"—тесе калать. Бÿллетенсем илме халăх черет тăнă. Суйлав комиççи членĕ ватă карчăка черетсĕр кĕртесшĕн. Пелагейа Тихоновна çилленнĕ пек пулса: „Епĕ ватă мар, Сталинла çамрăклăх ăш тулли",—тесе ответлет.

Савăнăç, халăх савăнăçĕ. Суйлав бÿллетенĕсем паракан пÿлĕме кĕрсен, кашни суйлав бÿллетенĕсене илесшĕн тăрашать.

— Григорий Михайлович Михайлов, йĕркипе 596 номĕр.

Суйлав комиççи секретарĕ ăна бÿллетен парать. Старик кулса илет, бÿллетенне темĕн тĕрлĕ çаврăкаласа пăхать. Ăна сасăламалли пÿлĕме кăтартса йараççĕ. Кĕрсе кайать. Пÿлĕмĕнче тĕттĕмрех пек туйăнать пулас ăна, вăл куçлăхне тăхăнса бÿллетене çаврăса пăхать. Нумай тăмарĕ. Алла пакет тытса тухрĕ те, суйлав йешчĕкĕ лартнă пÿлĕме кулса, савăнса кĕрсе карĕ.

Тухрĕ. Тухрĕ те: „Сасăларăм, Сталиншăн сасăларăм, телейлĕ пурнăçшăн сасăларăм" тесе пуçне тайрĕ. Анчах вăл киле каймасть. Айала аннă та, 18—20 çулхи çамрăксемпе пĕрле „Родина" йурра шăрантарать. Ташлать, кулать, унтан Сталин çинчен калать.

Çапла, декабĕрĕн 12-мĕшĕнче Шупашкар хулинчи 1-мĕш участкăри суйлавçăсем сасăлаççĕ. Суйлав участки çуртĕнче халăх тулли. Пурте савăнăçлă, хаваслă.

— Чкаловшăн, Стецкийшĕн, Андрейевашăн сасăлатпăр. Вĕсем пирĕн партин, Ленин—Сталин партин шанчăклă хĕрĕсемпе ывăлĕсем. Вĕсем пирĕн представителсем пулччăр, халăх ĕçĕшĕн тăрăшчăр,—тесе калаççĕ суйлавçăсем.

Пин ытла суйлавçă суйлав участкине ырă сунса пычĕç. Пин ытла суйлавçă халăхăн, тăван çĕршывăн ырлăхĕшĕн сасăларĕç.

Р. Шашков.

Кашнин чĕри пысăк савăнăçпа тулнă

Алăкран кĕрсен тÿрех ĕççыннисен чĕререн йуратнă çулпуçĕн—Сталин йулташăн портречĕ курăнса тăрать. Унпа йунашар аслă Сталинăн çывăх соратникĕсен, партипе правителства руководителĕсен: Молотов, Каганович, Ворошилов йулташсен портречĕсем. Сĕтелсем хĕрлĕ сăнпа витĕннĕ. Стенасем çинче ССР Союзĕн Аслă Советне совет халăхĕн чи шанчăклă та чи лайăх ывăл-хĕрĕсене суйлама чĕнекен хĕрлĕ лозунгсемпе плакатсем. Патефон Хĕрлĕ çарăн маршне шăрантарать. Купăс та пур, чечексем те нумай, хаçат-кĕнеке киоски те кунтах... Тултан пырса кĕрекен нийепле те савăнмасăр, хĕпĕртемесĕр тăма пултараймасть. Пурин чĕри те хаваслă, пурин те кăмăлĕсем ниçта шăнăçайми савăнăçпа тулнă. Суйлав комиççи секретарĕ патне пĕрин хыççăн тепри çитсе тăрать. Спискăра хăйĕн йатне курмасăр лăпланмасть вăл, мĕншĕн тесен кашниннех Аслă Совета депутатсем суйлас ĕçе активлăн хутшăнас шухăш.

Акă, сĕтел умне Козьмодемйанский йулташ пырса тăчĕ. Вăл 63 çулти старик. Анчах та çак самантра ăна утмăл виçĕ çулхи старик тесе никам та калас çук. Унăн çÿçĕсем кулаççĕ. Çине таса та симĕс гимнасторкă тăхăннă. Урисенче хура та çĕнĕ çăматă. Питĕ те типтерлĕ старик! Бÿллетенсене илсе вăрттăн сасăламалли кабинăна кула-кула кĕрсе кайрĕ.

... Мишă Йермолайев пырса тăрать суйлав комиççи секретарĕ патне. Мĕншĕн вăл çав тери савăннă пайан?—тесе ыйтас килет унтан. Мишă—18 çул тултарнă çамрăк. Вăл çĕнĕ шкулта 8-мĕш класра вĕренет. Вăл пайан чи пирвайхи хут Совет государствин аслă оргăнне—ССР Союзĕн Аслă Советне депутатсем суйлас ĕçе хутшăнать. Ку вăл пысăкран та пысăк чыс; пысăк хаваслăх... Çавăнпа та Мишăн çамрăк куçĕсем кулмасăр тăма пултараймаççĕ. Вăл хаваслă та çĕкленÿлĕ. Мишă пек телейлĕ çамрăк гражданинсем çĕршерĕн те пиншерĕн суйлав урнисем патне пырса, хăйсен сассисене ССР Союзĕн Аслă Советне депутата суйлама совет халахĕн чи лайăх çыннисемшĕн параççĕ. Çакнашкал тулли правала пурнăça Мишă пек çамрăк граждăнсем партипе совет влаçĕ, пирĕн чĕререн йуратнă аслă Сталин туса панипе илнĕ.

Вăхăт 11 сехет. Суйлав комиççи хирурги отделенине куçать. Кунта пÿртрен тухса айакка кайма пултарайман граждăнсем. Суйлав комиççийĕ пырса кĕрсен, тĕрлĕ комнăтăра сывалса выртакансем коридора тухса тулчĕç. Вĕсем пайанхи кун Аслă Совета суйламалине пĕлнĕ, кашнин аллинчех паспорт йе урăх документсем. Кунта та, хĕрлĕ кĕтесри пекех, депутатсене вăрттăн сасăласси йĕркелĕ пулса пырать. Темле ыратакан сурансем пулсан та, вĕсен кăмăлĕсем тулли савăнăçлă.

Çакнашкал çĕкленÿпе пулса пычĕ Аслă Совета депутатсем суйласси Шупашкар хулинчи 3-мĕш №-лĕ суйлав участкинче. Суйлавçăсем суйлава пурте пĕр шухăшлăн, организацилĕн пынă.

И. Семенов.

Епĕ пайан пысăк ĕç тунă

ВĂРМАР, 12/XII. (Телефонпа). Кивĕ Вăрмарта 2 суйлав участки ĕçлерĕ. Вăл участкăсенче ирхине 6 сехетре ĕçхресченĕсем суйлава питĕ нумай пухăннă. Вĕсем пайанхи кун пурте пысăк праçникри пек хаваслă. Ватă çынсем вăльли йалсовет 28 лав уйăрнă. Анчах ваттисем лав кĕтмесĕрех хăйсемех суйлава тухса пыраççĕ. Пайанхи кун суйлав участкине мар, Мускава та çуран кайма вăй пулĕ, теççĕ вĕсем.

Икĕ участкăра та буфет ĕçлет, хаçат-журнал çителĕклĕ. Пĕр йатарласа уйăрнă çуртра хуткупăс, балалайкă, патефон, гитарă пур. Унта сасăласа тухнă хыççăн, суйлавçăсем хăйсен пултарулăхне кăтартаççĕ.

Ф. Çитта.

А. А. Андрейев йулташ сăмахĕ

Ашхабад хулинчи суйлавçăсен пухувĕнче 1937 çулти декабĕрĕн 9-мĕшĕнче каланă

Йулташсем, чи малтанах мана Ашхабад хулинчи мĕн пур рабочисене, работницăсене, колхозниксене, красноармеецсемпе командирсене хĕрӳлĕ салам калама, çавăн пекех тата пĕтĕм туркмен халăхне хĕрӳлĕ салам калама ирĕк парăр. **(Алă çупаççĕ, „урра" кăшкăраççĕ).**

Йулташсем, Аслă Совета депутатсем суйлас тĕлĕшпе халиччен курман активлăхпа саралса кайнă суйлав умĕнхи кампани,—вăл кампанире коммуниссем партире тăманнисемпе блок туса тухаççĕ,—халь ĕнтĕ вĕçне çитсе пырат. Тепĕр виçĕ кунран Ашхабад хулинчи суйлавçăсем, пирĕн аслă Совет Союзĕнчи мĕн пур гражданĕсем пекех, ССР Союзĕн Аслă Советне хăйсен депутачĕсене суйлас правине пурнăçа кĕртеççĕ.

Пирĕн большевикла парти партире тăман рабочисемпе тата колхозниксемпе пĕрле ССР Союзĕн Аслă Советĕнче депутатсем пулма камсене хăпăл тăват-ха? Спискăсенче, хальхи вăхăтра пухусенче сӳтсе-йавакан нумай йышлă кандидатсем хушшинче есĕр, нумай çулсем хушши революцилĕ ĕçре тĕрĕсленнĕ партипе совет руководителĕсен йачĕсемпе пĕрлĕх, пирĕн ĕç геройĕсен, промышленнăçпа транспортри колхозсемпе совхозсенчи пирĕн стахановецсемпе стахановкăсен йачĕсене тупма пултаратăр. Кандидатсем хушшинче пирĕн калама çук чаплă льотчиксен тата совет интеллигенцин представителĕсен—инженерсен, докторсен, артиссен, профессорсен тата ыттисен йачĕсем те сахал мар.

Акă мĕнле ĕнтĕ ССР Союзĕн Аслă Советне депутата суйлама тăратнă кандидатсен составĕ, вăл кандидатсем çинчен хальхи вăхăтра пирĕн пĕтĕм аслă совет çĕршывĕ сӳтсе-йават. Заводсенчи рабочисен тата колхозниксен пухувĕсем палăртнă кандидатсем—совет халăхĕн лайăхран та лайăх представителĕсем пулса тăраççĕ.

Ашхабад, Кизыл-Арват, Красноводск рабочийĕсемпе работницисем, Туркменистанри йал районĕсенчи колхозниксемпе колхозницăсем манăн кандидатурăна ССР Союзĕн Аслă Советне депутата суйлама палăртнă. Çак сирĕн шанăçа епĕ хаваслăн та мухтавлăн йышăнатăп. **(Алă çупаççĕ, „урра" кăшкăраççĕ).** Епĕ, йулташсем, хамăн суйлавçăсене пĕр сăмах анчах калама пултаратăп: Совет Союзне ырлăх тăвасшăн тата совет Туркменистанне чечеклентересшĕн сирĕн шанăçа чыслăн пурнăçа кĕртме тăрăшăп. **(Алă çупаççĕ, „урра" кăшкăраççĕ).** Епĕ сире, суйлавçă йулташсем, çавăн пекех тата çакна калама пултаратăп: ниçта пăркаланмасăр Сталин йулташ хыççăн пырăп, пире аслă Ленин кăтартса панă çулпа пырăп. **(Алă çупаççĕ, „урра" кăшкăраççĕ).**

Епĕ, сирĕн кандидат, çакна шеллетĕп,—кашни суйлавçăпах тĕл пулма май çук, çавăнпа та суйлавçăсен пĕр пайĕпе тĕл пулнипех тата нумай мар пухусенче тухса каланипех чарăнма тивет. Хăйех паллă ĕнтĕ, кашни суйлавçах хăйсен кандидатне питрен курма пултараймасть: анчах пирĕн аслă коммунисла партине кашни суйлавçах питĕ лайăх пĕлет. Паллах, пирĕн суйлавçăсем Аслă Совета депутата суйлама тăратнă уйрăм кандидатсемшĕн çеç мар, тата çавăнпа пĕрлех вăл кандидатсене хăпăл тăвакан пирĕн мухтавлă большевикла партишĕн те сасăлаççĕ.

Коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн сасăласа, есĕр ССР Союзĕнчи мĕлйуншар суйлавçăсем пекех, çав вăхăтрах большевиксен партине шанассишĕн сасăлаттăр, вăл парти рабочи класран ӳссе тĕреклĕнчĕ, вăл парти хăй пурăнма тытăнсан пĕрремĕш кунран пуçласа нимĕн уйăрăлмасăр хăйĕн халăхĕпе пĕрле пырат, епĕр партишĕн сасăлаттăр, вăл парти йертсе пынипе рабочи класс хресченсем 1917 çулхи октябĕрте помещиксемпе капиталиссене татăклăн çĕнтерчĕç, есĕр партишĕн сасăлаттăр, вăл парти акă ĕнтĕ çирĕм çул хушши çĕршыва социалисăм çулĕпе коммунисăм патне ăнăçлăн йертсе пырат. Акă камшăн сасăлаттăр есĕр палăртнă кандидатсемпе пĕрлех. **(Алă çупаççĕ, „урра" кăшкăраççĕ).**

Хăвăр сасăрсене тăратнă кандидатсемшĕн панипе есĕр большевиксен партине шаннине кăтартаттăр, вăл парти йертсе пынипе пирĕн çĕршыв кай йулнă çĕршывран малта пыракан промышленнăçлă çĕршыв пулса тăчĕ, çакă вăл чи малтан капиталисăмлă çĕршывсене пăхăнса тăрас мар çĕрте аларан та аслă вăй парат. Халь ĕнтĕ пирĕн совет промышленнăçĕ туса кăларма пултарайман машинсемпе материалсем çукла пĕрех. Рабочи класăн хăрушă инкекне—ĕçсĕрлĕхе йаланлăхах пĕтернĕ.

Тăратнă кандидатсемшĕн сасăласа, пирĕн суйлавçăсем çавăнпа пĕрлех большевиксен партине шанассишĕн сасăлаççĕ, вăл парти йертсе пынипе йалта кулаксемпе байсен класне çĕмĕрсе тăкассине организацилесе ăнăçлăн пурнăçа кĕртнĕ, колхоз стройĕ çĕнтернĕ, пирĕн промышленнăç туса кăларакан тракторсем, комбайнсем тата йалхуçалăхĕнчи ытти сложнăй машинăсем питĕ нумай панипе йалхуçалăхĕ кайа йулнине йаланлăхах пĕтернĕ. Епĕр халь хăйулăнах çапла калама пултаратпăр: выçлăх çинчен тăракан ыйтăва пирте йаланлăхах сирсе йанă. Пирĕн йалхуçалăхĕ халь çулран çул калама çук пысăк утăмсемпе пĕрмайах малала кайса пырĕ. Çакна каласан та çитĕ: ĕнтĕ кăçалхи çулах епĕр халиччен курман пысăк тухăçлă тырпул—çичĕ мĕлйун пăт тырă туса илтĕмĕр. Халь ĕнтĕ пирĕн умра выçлăх ыйтăвĕ тăма пултарат-и вара? Çук, йулташсем, вăл ĕнтĕ халь ĕмĕрлĕхех манăçа йулчĕ. **(Алă çупаççĕ).**

Анчах пĕр тырпул çеç мар тата çĕрмамăкĕ те, ытти техникăлă культурăсен тухăçлăхĕ те пирĕн ĕлĕкхи пек мар, темтерийех нумай, çакă вăл ĕçме-çиме тата тумланма кирлĕ тĕрлĕрен таварсене нумайрах туса кăларма май парат. Акă мĕн тума пултарнă пирĕн аслă, коммунисла парти, вăл парти йертсе пынипе рабочисемпе хресченсем пĕр çĕнтерӳ патĕнчен тепĕр çĕнтерӳ патне пычĕç. **(Алă çупаççĕ).**

Хăвăр сасăрсене коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн парса, есĕр партишĕн сасăлаттăр, вăл парти йертсе пынипе граждан вăрçинче шурăгвардеецăсен, басмачсен тата йутçĕршывсенчи тĕрлĕрен империалисла интервентсен çарĕсене çĕмĕрсе тăкнă.

Пирĕн коммунисла парти йертсе пынипе хăватлă Хĕрлĕ Çар тунă, вăл хăйĕн дисциплинипе, ăнланăвĕпе тата пуйан техникăпа—тупăсемпе, танксемпе тата самолетсемпе хĕçпăшалланнипе пирĕн тăшмансен сехрине хăптарат. Есĕр партишĕн сасăлаттăр, вăл парти йертсе пынипе акă ĕнтĕ нумай çулсем хушши империалисăмлă государствăсен вăрçă кăларас тĕлĕшпе тăвакан тĕрлĕрен провокацийĕсене сирсе пытăмăр. Хăйĕн пĕлсе тунă тулашри политикипе пирĕн парти тăшмансен Совет Союзĕ çине тапăнас шутпа тăвакан тĕрлĕрен провокацилĕ хăтланăвĕсене аркатса пырат.

Пирĕн парти çакăн пек мир политикине тытса пырат—вăл тăшмансене хĕçпăшалсăрлатат çеç мар, вĕсен вăрçăлă шухăшĕсене массăсене ăнлантарса парса, пăсса пырат çеç мар, çав вăхăтрах тата пĕтĕм тĕнчери нумай мĕлйунлă массăсене хăй йенне çавăрса пырат. **(Алă çупаççĕ).**

Пирĕн большевиксен партийĕ хăпăл тăвакан кандидатсемшĕн сасăласа, есĕр наци ыйтăвĕ тĕлĕшпе тĕрĕс решени тунă партишĕн сасăлаттăр. Уйрăм националлăхсем хушшинче нумай çĕршер çулсем, пиншер çулсем хушши хирĕçӳсем пулнă—çийеле пуласшĕн кĕрешӳ пынă,—çав хирĕçӳсемпе кĕрешӳве пуç пулнă експлоататăрла классем чĕртсе пынă. Совет стройĕнче çак наци ыйтăвне йаланлăхах татăклăн татса панă. Ăна пирĕн Аслă Союзра тăракан нацисем ирĕклĕн пĕрлешнипе, тĕрлĕ нацилĕ халăхсем социалисăм строителстви ĕçĕнче пурте пĕр пулса хастарлăн ĕçленипе, империалисăмлă тискер кайăксем тапăнасран пурте пĕр пулса сыхланнипе татăклăн татса панă. Çав союз тулашĕнче пулас пулсан кирек хăш наци те пур пĕрех империалисăмлă пусмăра кĕрсе ӳкмеле пулат.

Çаксене каланă хыççăн ĕнтĕ ыйту тухса тăрат: пирĕн суйлавçăсен—рабочисен, хресченсен, служащисен, интеллигенцин—пирĕн коммуниссен партийĕ хăпăл тăвакан кандидатсемшĕн сасăлама сăлтавсем пур-и, пирĕн суйлавçăсен хамăрăн коммуниссен партине шаннине татах, тата тепĕр хут кăтартма сăлтав пур-и?

Çак ыйту çине кашни суйлавçă çакăн пек ответ парат: чăн, Ленин—Сталин партишĕн, Аслă Совета суйламали кандидатсемшĕн пĕтĕм чĕрĕрен тăма пирĕн пур сăлтавсем те çителĕклĕх. **(Алă çупаççĕ).**

Çав сăлтавсем пĕтĕм Туркмен халăхĕн те пур. Совет влаçĕччĕнхи вăхăтра Туркмени мĕнле пулнă-ха? Вăл вырăс патшин колонийĕ кăна пулнă. Туркмен халăхĕ пурнакан пысăк çĕршыва йаланах саратма купецсемпе кулаксен аллине панă, унта полицейскисемпе ӳсĕр вырăс чиновникĕсем мĕн тăвас тенĕ çавна тунă. Халĕ ĕнтĕ Туркмени мĕнле? Вăл ирĕкле пухнă ĕçлĕх çĕршывĕ пулса тăрат, вăл, ытти союзлă республикăсемпе харăссăн утса, хуçалăхпа культурă чечеклесе ӳсекен çулпа ăнăçлăн малала пырат.

Вăл, аслă Совет Союзĕнчи пĕтĕм халăхсем пекех, халăх талкишпех хутла пĕлекен пулса çитес çулпа пырат. Çак çĕршывра, хамăрăн Совет Союзĕнчи ытти халăхсем патĕнчи пекех, чиновниксем йĕркесĕр хăтланни текех ĕнтĕ çук,—Советсем урлă пурнăçа кĕрсе пыракан халăхăн хăйĕн управленийĕ пур. Çаксене пурне те Туркмен халăхĕ вырăс халăхĕпе союзлă пулса, коммуниссен партийĕ йертсе пынипе турĕ. **(Алă çупаççĕ).**

Анчах ылханлă тăшмансем—двурушниксем, троцкисла-бухаринла предателсем тупăнчĕç, вĕсем хăйсен ирсĕр аллисене—кĕрешсе çĕнтерсе илни çине ал çĕклерĕç. Вĕсем ĕçе кайала çавăрасшăн пулнă, çавна тăвас тесе совет халăхне хирĕç кĕрешме ним именмесĕр чи ирсĕр меле суйласа илнĕ—вĕлернĕ, сăтăрланă, империалисăмлă государствăсен разведчикĕсемпе шпионсен ĕçне тунă.

Çакăн пек тăшмансем—буржуалă националиссем сирĕн Туркменире те пулнă. Вĕсем, совет ĕçĕнчи, парти ĕçĕнчи чи ответлă постсенех кĕрсе кайса, нумай вăхăт хушши çав постсенче пулнă. Атабайев, Айтаков, Мухамедов тата ыттисем те çавăн пек тăшмансем пулнă. Çавсем ĕнтĕ, Туркмен халăхне социалисăм строителствинче ĕçлеме чарас тесе, басмачество организациленĕ, басмачсене хĕçпăшалсемпе апат-çимĕçсем парса тăнă. Çавсем ĕнтĕ, Туркмен халăхне культурăпа хуçалăх аталанăвĕ тĕлĕшпе малала кайма чарас тесе, колхозсемпе промышленнăçра сăтăрланă. Çавсем ĕнтĕ, Туркменийе ССР Союзĕнчен уйăрас тесе, йутçĕршывсенчи империалиссемпе, фашиссемпе ирсĕрĕн сурăçнă. Вĕсем Туркменийе Индипе Афганистан пек, урăхла каласан, империалиссен колонийĕ туса хурасшăн пулнă. Вĕсем çавна тума вăйсăр пулнă та, халĕхе фашиссен разведчикĕсемпе шпионĕсем пулса тăнă. Вĕсем чăнипех Туркмен халăхĕн ирсĕр тăшманĕсем.

Халĕ ĕнтĕ çав тăшмансене, шпионсемпе предателсене тупса тытнă, вĕсене тĕп тăваççĕ. **(Алă çупаççĕ).**

Совет влаçĕпе пирĕн большевиксен партийĕ халăх кĕрешсе çĕнтерсе илни çине ал çĕклеме памаççĕ. Çакна пирĕн тăшмансем пурте асра тытчăр.

Анчах ССР Союзĕ йĕри-тавра капиталиссем пуçпулса тăни пур чухне, ССР Союзĕнче пĕтернĕ експлоататăрла классен йулашкийĕсем пур чухне, тăшмансем хăйсен ишĕлтерӳлĕ ĕçне тума пĕр хут анчах мар хăтланĕç.

Çакна, уйрăмах сирĕн, Туркменири рабочисемпе работницăсен, колхозниксемпе колхозницăсен, партири тата партире тăман работниксен, асра тытас пулат. Туркмени уйрăм лару-тăрура—вăл йаланах, Совет Союзĕнче чикĕре пулнипе, йутçĕршывсен капиталисĕсемшĕн астарулăскер пулнă. Йулташсем, тăшман тĕлĕшпе сыхă пулăр.

Тăшмансен йулашкийĕсем, тăрă шыв çине кăларса çитерейменнисем,—кулаксем, байсем, совета хирĕçле муллаcемпе духовенство халĕ пыракан суйлав умĕнхи кампанире хăйсене нимĕнпе те палăртман теме çук.

Çакă уççăнах паллă—вĕсен Аслă Советăн суйлавĕнче хăйсен кандидачĕсене тăратма май çук,—саккун чарнăран мар май çук. Саккун кирек мĕнле кандидатурăна тăратма та ирĕк парат, анчах вĕсем хăйсен кандидачĕсене тăратма пултараймаççĕ, мĕншĕн тесен пирĕн рабочисемпе хресченсем вĕсене çавна тума ирĕк памаççĕ. **(Алă çупаççĕ).**

Çакна пула çавнашкал майсăр тăрса йулнипе, вĕсем пирĕн ретсене йĕркерен кăларас тесе ытти тĕрлĕрен мелсемпе усă курма пăхаççĕ. Вĕсем хăшпĕр çĕрте вăрттăн майсемпе коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсене хурлама хăтланаççĕ. Вĕсем, Аслă Совет суйлавне хутшăнакансен хисепне те пулин чакарас тесе, ламран-лам сăмах йарса халăха, чи малтан сахал ăнланакан граждансене, хăратса хăрахасшăн. Анчах çакăн пек мĕскĕнĕн хăтлансан та халь тăрă шыв çине кăларман тăшмансем нимех те тума пултараймаççĕ, мĕншĕн тесен пирĕн социалисăмлă тăван çĕршывăн пĕтĕм халăхĕ Аслă Совета депутатсем суйлама хальччен пулман активлăхпа кандидатсем тăратса сӳтсе-йавнă чухне хăйĕн ирĕк-кăмăлне палăртса пачĕ ĕнтĕ, хăй камшăн сасăлассине каласа пачĕ ĕнтĕ. Вăл пирĕн большевикла партине вĕçĕмсĕр шанса тăрассишĕн сасăлат.

Сывă пултăр пирĕн ытараймми чаплă тăван çĕршыв—хăватлă Советлă Социалисăмлă Республикăсен Союзĕ! **(Алă çупаççĕ, „урра" кăшкăраççĕ).**

Сывă пултăр пирĕн мухтавлă большевикла парти! **(Алă çупаççĕ, „урра" кăшкăраççĕ, оркестр „Интернационал" выльат).**

Пирĕн аслă государствăн мĕн пур ĕççыннисем çеç мар, тата пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисем те уншăн сасăлама тăрăшакан çын сывă пултăр! Сывă пултăр пирĕн тăван, аслă Сталин!. **(Алă çупаççĕ, „урра" кăшкăраççĕ, оркестр „Интернационал" выльат).**

Пурте уйав тумĕпе

ИШЛЕЙ, декабĕрĕн 12-мĕш (Телефон тăрăх). Пайан йал праçник тумĕпе чиперленнĕ. Çуртсемпе хапхасен тăррисенчен хĕрлĕ йалавсем вĕлкĕшеççĕ. Хӳме-картасем, телефон йупасем çине çыпăçтарнă плакатсем, лозунгсем таçтанах курăнаççĕ.

Каç, 12 сехетре ĕçлеме чарăннă електрицă станци, 5 сехет çитсен каллех ĕçлеме тытăнчĕ. Колхозниксен, йединоличниксен, служащисен килĕсенче Илич лампиcем çутăлчĕç.

6 сехет çитмен-ха. Урамăн пур кĕтессисенчен те суйлавçăсем Ишлейри вăтам шкула пухăнма пуçларĕç. Кунта пайан вĕсем Аслă Совета суйлаççĕ. Шкул умне: „Ырă сунса кĕтетпĕр" тесе çырса çапнă.

Шăп 6 сехет. Сасăсем памали пӳлĕм уçăлат. Малтанах Ишлей район центрĕнчи служащисем сасăласа тухаççĕ. Халăх йышланнăçемĕн йышланат. Хăйсем уйав тумĕсем тăхăннă.

Вăрăм коридор. Унта çулпуçсен сăнĕсем, тĕкĕрсем, радио, сехет. Алăкран кĕрсен пĕр йенче буфет, тепĕр йенче канмали пӳлĕм. Сасăласа тухнисем буфета йе канмали пӳлĕме кĕреççĕ. Кунта патефон, хуткупăс, биллиард, балалайкăсем. Акă Селедкин йулташ аллине икĕ ĕретлĕ купăс тытнă та кĕвĕ шăрантарат. Хĕрсех биллиардла выляççĕ. Хăшĕсем купăс калаççĕ, ташлаççĕ.

Ачасен пӳлĕмĕ. Шап-шурă простынсем сарнă тимĕр кроватсем. Акă пĕр кровачĕ çинче пĕр ача тапкаланса выртат. Унăн амăшĕ суйлавра.

Бӳллетенсем паракан сĕтел умне 77 çулхи Татйана Суркова колхозницă пырса тăчĕ. Кĕсйинчен шурă тутăрпа чĕркенĕ ĕç кĕнекине кăларса, суйлав комиссин секретарне кăтартрĕ. Бӳллетенсене илчĕ. Суйлав пӳлĕмне кĕрсе сасăларĕ. Конвертне урнăна йачĕ. Кайран вăл çамрăксем ташласа йурласа савăнакан çĕре пырса тăчĕ.

П. Архипов.

Суйлавра

МĂН СĔНТĔР. декабĕрĕн 12-ш (телефон тăрах). Вăхăт 6 сехет çитмен-ха. Мăн Сĕнтĕрти хватерсенче çута. Радиоузел кашни килех çĕнĕ хыпарсем парат.

Çынсем те ман пекех сывăрмасçĕ иккен, чи пирвай çитсе сасăлас тенĕччĕ,—тесе каласса васкаса утат „Трудовик" колхозри Касйанов Прохор колхозник. Мăн Сĕнтĕр суйлав участкинче суйлавçăсем туллийех. Вăхăт шăп 6 сехет. Илемлĕ çипуçпа тумланнă комисси секретарĕ Семенова Кăтă хăйĕн вырăнне ларчĕ. Суйлавçăсем унăн умне чĕрет тăрса тухрĕç. Чи малтан килхуçи хĕрарăмĕ Краснова Марийа тата унăн упăшки халăх судйи Краснов бӳллетенсем илсе, сасăламали пӳлĕме кĕчĕç. Нумайах тăмарĕç, пӳлĕмрен тухса хăйсен конвертчĕсене йешчĕке йачĕç.

Калайкас тата ытти суйлав участкисенче кашни киле хĕрлĕ йалавсем çакнă. Пайан лашапа çӳрекенсем те пĕкĕсем çине хĕрлĕ йалавсем çакнине чылай тĕл пулма пулат.

Горланов.

Совет гражданинĕн аслă кунĕ

Республикăн çамрăк столици çинче иллюминацисен çути çурçĕр шевлийĕ пек йалкăшат. Епĕр Советсен Дворецне тăвакан площадкăри çӳлĕ вышкă çине хăпаратпăр. Ирхине ултă сехетре тĕнчери чи аслă уйав пуçланат. Уйав умĕнхи хула çутă, хускавлă, кĕтевлĕ. Шупашкар чаплă ире—ултă сехет çапасса кĕтет...

Советсен Дворецне тăвакан каменщик—бригадир Алексей Федорович Горбунов пайан çурçĕр иртсен виçĕ сехетрех тăчĕ. Унăн пуçĕнче пĕр аслă шухăш—тепĕр виçĕ сехетрен тĕнчери чи аслă правительствăна—социалисăм çĕршывĕн правительствине суйлама тытăнмала. Вăл—совет гражданинĕ. Хĕвеллĕ тĕнче гражданинĕн тивлетне, тивĕçлĕхне Горбунов йулташ кĕçĕр уйрăмах тарăнăн туйса илчĕ. Вăл çак кĕтнĕ чухнехи хумханулă самантра хăйĕн пĕтĕм пурнăçне тата тепĕр хут пăхса тухрĕ. Тĕплĕн, çивĕччĕн тĕрĕслерĕ вăл хăйне: иртнĕ кунçулăн сыпăкĕсенчен пайанхи совет гражданинĕн сăн сăпатне пăсакан кăлтăксем пулман-и? Çирĕп утса пынă-и аслă пурнăç çулĕ тăрăх? Аслă суйлава тухма пĕтĕмпех таса-и ун чĕри? Анчах темĕнле хыттăн тĕпчесен те, Алексей Федорович хăй пурнăçĕнче совет гражданинен тивлетне пăсакан кун тупаймарĕ. Вăл чаплă уйава таса чĕрепе тухрĕ. Горбуновсен йахĕ—каменщиксен çирĕп йахĕ. Вĕсем Горький облаçĕнчи Курмыш районĕнчен. Алексей Федоровичăн ашшĕ те, аслашшĕ те хăйсен ĕмрисене чул çуртсем хывса çӳресе иртернĕ. Асăрхамала: ĕлĕкхипе хальхи каменщик хушшинче пысăк уйрăмăх пур.

Ĕлĕкхи тискер патша правительстви каменщиксене тĕрмесем, чиркӳсем хывтарнă. Алексей Федоровичăн ашшĕпе аслашшĕ хăйсен ĕмĕрĕнче пайтах купцана дворецлартса панă, анчах хăйсем лапчăнса ларнă ласра пурăннă. Сакăр çынна тăрантарма çăмăл пулман. Халĕ ĕçлев прави, тетпĕр. Унчух çулахи вăхăтра, сезонра, ӳкеччен ĕçленĕ, анчах хĕлле—каменщик хăт выçă вил!—ниçта та ĕç тупма пултарайман. Пайан çимесĕр выртнă, ыран мĕнле ура çине тăрасси—шанчăксăр пулнă. Халĕ сăмах, пичет ирĕклĕхĕ, тетпĕр. Алексей Федорович нумайах та пулмасть, Шупашкар ĕççыннисем Совет Союзĕн Геройне В. П. Чкалов йулташа кĕтсе илнĕ чух, пĕтĕм халăх умне тухса столицă трибуни çинчен хĕрӳлĕ сăмах каларĕ. Рабочисен пухăвĕсенче те Горбунов йулташ ĕçри çитменлĕхсене, пуçлăхсен йанăшĕсене пĕр хăрамасăр хăйулăн критиклет. Ĕлĕкхи патша саманинче, Алексей Федоровичсен ашшĕ, чунĕ тăвăрланса çитнипе, земскине хирĕç пĕр сăмах çеç каланă, ăна çавăнтах тĕрмене кайса хупнă, розгăпа çунтарнă. Унчух каменщик хăйне вальли хăйĕн аллипе тĕрме тунă.

Алексей Федорович Горбунов—социалисăм строителĕ, халĕ Шупашкарти Советсен Дворецне тăват. Пирĕн хулара вăл 1934 çултанпа Государствă Банкĕн, електростанцин, дезостанцин, икĕ шкулăн, куç лечебницин çурчĕсемпе 26 хватерлĕ çурта тунă. Çĕрте ĕçленĕ. Горбунов йулташ:—Шупашкар—манăн тăван хула,—тесе хăйулăн калама пултарат. Мĕншĕн тесен, вăл хула стенисем çине кирпĕчпе пĕрле хăйĕн вăй-хăватне, пултарулăхне, чĕрери кăмăлне хунă. Шупашкара киличчен вăл Горькинче социалисăмлă хула строителствинче ĕçленĕ.

Пирĕн çĕршыва вăл, манăн çĕршыв, тет. Тĕрĕс калат. Мĕншĕн тесен, социалисăмăн çутă çуртне тунă çĕре вăл хăйĕн йахри хастарлăхне панă. Вăл пайан—стахановец. Совет влаçĕ—пĕтĕм халăх влаçĕ. Совет государстви Алексей Федоровича, амăшĕ хăйĕн тăван ывăлне пăхнă пек, пăхат. Сталинла Конституци тăрăх, совет гражданинĕн канăç прави пур. Алексей Федорович çак çулта, сентябĕр—октябĕр уйăхĕсенче, государствă шучĕпе Крыма курорта кайса килчĕ. Тĕлĕнмеле çул, тĕлĕнмеле дворецри тĕлĕнмеле ырлăх, йумахри пек пуйан апат-çимĕç, Крым хĕвелĕ, ăшă тинĕс хумĕсем,—пурте вĕсем укçасăр, тӳлевсĕр. Нихăçан та, нихăçан та манас çук çав ырă кунсене... Выртатăн хум çине, сана аслă тинĕс тăван аннӳ ала çинче çĕклесе пынă пек, çĕклесе пырат. Ăшă хумсен лăпкавĕсем халĕ те чĕре çинче. Уйрăмах пайан. Совет влаçĕ сана тимлĕн пăхнине пайан есĕ нихăçанхи пек мар тарăнăн туйса илетĕн.

Акă пилĕк сехет. Алексей Федорович хăйĕн икĕ уйăхри ачине çывăракан арăмне, Альтука, хуллен лăпкаса вăратрĕ. Алексей Федоровичпа арăмĕ тимлĕн çăвăнса, арчаран чи лайăх çипуççсем илсе тăхăнчĕç. Унтан хăйсен паспăрчĕсене тата тепĕр хут тĕрĕслесе, вĕсене чĕре çинчи кĕсйене чикрĕç. Аслă самант çывхарсах килет. Строителсем хăйсен арăмĕсемпе, 18 çул тултарнă ывăл-хĕрĕсемпе, йаш-кĕрĕмсем бараксенчен хĕрлĕ йалавсем, купăсем, патефонсем йатса тухаççĕ. Таçтан хуларан музыкă сасси йанăраса килет. Декабĕр сивви совет çыннисен çĕкленнĕ вĕри кăмăлне сивĕтмест, тата ытларах хĕрӳлентерет. Питсем çунма тытăнаççĕ.

Вунииккĕмĕш суйлав участкине—строителсен клубне пайан 1366 суйлавçă пычĕ. Вĕсенчен строител—рабочисем 600 çынна йахăн. Ыттисем—пединститут студенчĕсем, военный городокра пурăнакансем, Урицки, Ленинград, Ворошилов урамĕсенчи граждансем. Строителсен колоннинче йурă вăранат:

„Широка страна моя родная..."

Йаланхи пекех, малта строител-стахановец—бригадир Алексей Федорович Горбунов утат. Ун аллинче хĕрлĕ йалав. Унпа йунашар—унăн ача çĕкленĕ арăмĕ.

Суйлав пункчĕ суйлавçăсене, хаклă хăнасене кĕтсе илнĕ пек, кĕтсе илчĕ. Çуртăн малти йенĕнче пире телейлĕ пурнăç туса панă аслă çулпуçĕ Сталин йулташăн пысăк сăнĕ. Алăк çине „Сире ырă сунса кĕтсе илетпĕр" тесе çырса хунă. Йалавсем çăмăлăн вĕçкĕшсе саламлаççĕ. Алексей Федоровичпа арăмĕ суйлав пунктине кĕрсенех, чи малтан хăйсен ачине пысăк çуртăн пĕр вĕçĕнчи пӳлĕме уйăрса панă йаслине вырнаçтарчĕç. Унтан вĕсем кантăк айĕнче çакăнса тăракан спискăсем патне пырса, хăйсен йачĕсене тата тепĕр хут тĕрĕслерĕç. Тĕрĕсех çырнă. Спискă тăрăх Алексей Федорович хăй 254-мĕш суйлавçă, арăмĕ—255-мĕш. Акă сехет ултă çапрĕ. Сасăламали пӳлĕме кĕмели алăк йари уçăлса кайрĕ. 12-мĕш суйлав участкин председателĕ Мартынов йулташ суйлав пуçланни çинчен пĕлтерчĕ. Чаплă самант! Ура çине тăрса „Интернационал" йурлакан суйлавçăсем çине хĕрлĕ хăмачсем çинчен аслă çулпуçĕ Сталин йулташ, унăн çывăх соратникĕсем Молотов, Ворошилов, Калинин, Йежов йулташсем ăшшăн пăхаççĕ.

Часах акă Алексей Федорович Горбуновпа Йевдокийа Ивановна Горбунова йулташсен сасăлама кĕме вăхăт çитрĕ. Суйлав комиссин секретарĕ ларакан сĕтел патне утса çитни сисĕнмесĕрех йулчĕ. Горбунов йулташ хăйĕн паспортне кăларса пачĕ. Секретăр тĕрĕслерĕ. Алексей Федорович аллине виçĕ тĕслĕ—шурă, кăвак, сенкер хут татăкĕ тата пĕр конверт тыттарачĕ. Сасăламали пӳлĕме кайакан çула паха кавир сарнă. Утма çăмăл, çемçе, ура сасси йанăрамасть. Алексей Федорович чаршава сирсе пĕчĕкçĕ пӳлĕме кĕчĕ. Кунта вăл, пĕччен çĕрте, хăйĕн правине, хăйĕн ответлăхне тата тарăнраххăн туйса илчĕ. Çурçĕр Польусĕнчен—Хура тинĕс таран, Балти тинĕсĕнчен Аслă океан таран сарăлса выртакан аслă социалисăм çĕршывне тытса пыма, Аслă Совета чи шанчăклă, чи тӳрĕ кăмăллă, чи ăслă, чи вăйлă çынсене суйламала. Пайантан Совет гражданинĕ Алексей Федорович Горбунов, ытти темиçе мĕлйун суйлавçăсемпе пĕрле, хăйĕн пурнăçне, телейне, ăраскалне, малашлăхне хăй суйлакан çынсен аллине шанса парат.

Вăл хăйĕн пурнăçĕнче пайан пысăк та ответлă ĕç турĕ. Вăл хăй суйланă çынсемшĕн пĕтĕм халăх, пĕтĕм çĕршыв умĕнче, пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисем умĕнче ответлă. Кабинăран тухсан, Алексей Федорович суйлав комисси ларакан пӳлĕме—суйлав йешчĕкĕ патне çирĕп утăмсемпе мăнаçлăн утса пычĕ. Хăйĕн паха канвертне вăл, çĕршыв умĕнче йаланах тӳрĕ кăмăллă çын пулма тупа туса, çурлапа мăлатуклă йешчĕке— суйлав йешчĕкне йачĕ.

Унтан çывăхри алăкпа урамала тухса кайрĕ. Вăхăт питех те ир-ха. Киле кайас килмест. Алексей Федорович строителсен клубĕн çулти етажне—канакансен пӳлĕмне улăхрĕ.

Кунта музыкă, савăнăç, тулли хаваслăх. Оркестр çĕнĕрен çĕнĕ кĕвĕсем выльаса парат. Пултарулăх кружокĕсен членĕсем ывăнма пĕлмеççĕ. Вĕсен репертуарĕ вĕçĕмсĕр. Артиссене „Темп" обществинче тăракан физкультурниксем улăштараççĕ. Кунтах пĕр кĕтесре—шашкă-шахмăт, биллиард. Вулав пӳлĕмĕнче—çĕнĕ хаçат-журналсем. Айалта буфет, кĕнеке киоски ĕçлет. Кунтах суйлавçăсене тĕрлĕрен ыйтусемпе консультацисем параççĕ.

Алексей Федоровича, малтанрах сасăласа тухнăскерне, халăх сырса илчĕ. Пурте ыйтса пĕлесшĕн.

Строителсем аслă суйлав кунне лайăх хатĕрленсе кĕтсе илчĕç. Ку участкăра, малтан пуçласа вĕçне çитиччĕнех, Сталинла Конституципе суйлав положенине вĕренес тĕлĕшпе 78 кружок, 87 пропагандис, 3 агитколлектив ĕçленĕ. Кружоксене çӳреймен суйлавçăсем патне килĕсене кайса ăнлантарса панă.

Вуниккĕмĕш участкăчи суйлавçăсем большевиксен коммунисла партишĕн, коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕ тăратнă Чкалов, Андрейева, Стецкий йулташсен кандидатурисемшĕн сасăлаççĕ.

Совет халăхĕ тăван çĕршыв малашне те хăватлă, культурлă, ирĕклĕ социалисăмлă державă пултăр тесе тăрăшат, çавăнпа вăл большевиксен партишĕн сасăлат, çавăнпа вăл коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн сасăлат.

12-мĕш суйлав участки.

Арк. Ĕçхĕл, Ив. Мосейев.

Ĕнер Чăваш халăхĕ, Совет Сойузĕнчи пĕтĕм халăхпа пĕрле, Ленин—Сталин партийĕшĕн сасăларĕ

Кооптехникумри суйлав участкинче

Пайан историре пулман событи. ССР Сойузĕнчи мĕн пур ĕçсыннисен Ленинăн—Сталинăн çĕнтерÿлĕ йалавĕ тавра пĕрлешмели аслă уйав кунĕ. Пайан ĕçсыннисем коммунис-кандидатсемшĕн, çавăн пекех партире тăман кандидатсемшĕн те хăйсен сассисене параççĕ.

Кашни суйлавçă чи малтанхи бÿллетене илме тăрăшат. Çавăнпа та кашни суйлавçă суйлав участкине васкат. Шупашкарти вунвиççĕмĕш суйлав участкине 5 сехетрех суйлавçăсем пухăннă. Вĕсем тепĕр хут спискăна тĕрĕслеççĕ, йăланман ыйтусене ыйтса пĕлеççĕ. Хаçат-журнал, кĕнеке вулаççĕ.

6 сехет. Суйлав комиçци членĕсем вырăнта. Суйлав йешчĕкне пичетлĕнĕ хыççăн, суйлав комиçци председателĕн заместителĕ орденоносец Федоров йулташ суйлав пуçланни çинчен пĕлтерчĕ. Суйлавçăсене бÿллетенсем, конвертсем пама тытăнчĕç. Суйлавçă—кабинăра. Ун умĕнче кăранташ, конверта йĕпетме шыв.

Суйлав урни патĕнче пединститутра II-мĕш курсра вĕренекен Гордей Федорович Мадÿшкин.

— Епĕ пайан ку вăхăта çывăрмасăр кĕтнĕ. Çĕршывăн чи хакла ывăл-хĕрĕсемшĕн чи малтан сасăлама мана тиврĕ, телейлĕ епĕр çамрăксем,—тет вăл.

Пĕрин хыççăн тепри сасăлат, ĕç хĕрÿлĕн пырат.

Суйлавçă кунта вăхăта савăнăçлă ирттерет. Çуйлавçăсене кĕтсе лармали пÿлĕмсенче тем те курма, илтме пулат. Пĕр пÿлĕмĕнче çамрăксемпе ваттисем туллийех ларса тухнă, Унта духовой оркестăр вылꙗат, пианино, байан, струнăй оркестр. Кунта ташлаççĕ, йурлаççĕ, вăйă вылꙗаççĕ. Декламатăрсем стихсем каласа параççĕ. Физкуꙗтурниксем хăйсен пултарулăхне кăтартаççĕ. Нимрен ытла педрабфакри хор йурлани суйлавçăсене килĕшрĕ.

Тепĕр пÿлĕмĕнче шашкă-шахмăтла, биллиардла вылꙗаççĕ. Радио итлеççĕ. Виççĕмĕш пÿлĕмре кĕнеке, хаçат-журнал вулаççĕ. Çавăнпа та ватă карчăксемпе стариксем сасăланă хыççăн тепĕр хут ку пÿлĕмсене пыраççĕ, çамрăксемпе пĕрле савăнаççĕ.

— Ват пурнăç килчĕ, вилес килмест халĕ, çамрăкланма май çукши?—теççĕ вĕсем кулкаласа.

Çамрăксем ташланă, йурланă залăра пĕр ватă старик Н. Н. Французов йулташ чылай вăхăт хушши тĕлĕнсе ларат.

— 78 çула çитрĕм. 67 çул хушши пĕремĕк-канфет тăвакан фабрикăра ĕçленĕ. Талăкне 18-20-шер сехет ĕçленĕшĕн кунне 40-50 пус тÿленĕ. Унтан та çуррине тытса йулнă. Мĕнчухлĕ нуша курман пулĕ епĕ патша саманинче! Халĕ çĕршывăн чи чаплă ывăл-хĕрĕсемшĕн сасăлатпăр. Килех машинпа илме пыраççĕ, леçсе те йараççĕ. Ĕлĕкхи çамьнара пулсан епĕ тахçанах выçă вилнĕ пулăттăм; халĕ епĕ виçĕ çул хушши ĕнтĕ государствăран пенси илсе тăратăп, тет Французов йулташ.

— Ку пысăк çуртра пÿлĕмсем нумай, хăш пÿлĕмре суйлав пырат? —тесе ыйтат хаꙗ çеç пÿлĕме кĕнĕ ватă карчăк.

— Кунта кĕтмели пÿлĕм, унта бÿллетенсемпе конверт параççĕ, çaвăнта сасăламала, малтан кунта хывăнмала, тесе кăтартса парат дежурнăй.

Пĕчĕк ачасене ваꙗꙗи уйрăм пÿлĕм уйăрнă. Вĕсем хăйсем тĕллĕн савăнаççĕ. „Каймастăп епĕ халĕ киле“, тет пĕр ачи. Меншĕн тесен кунта ăва кирли пурте пур. Тĕрлĕ уйăнесем, вылꙗамали теттесем, кĕнеке, кăранташ, хут, патефон. Пÿлĕме плакатсемпе, лозунгсемпе, çулпуççен сăнĕсемпе илемлетнĕ. Ачасене çитереççĕ, ĕçтереççĕ.

Пĕр-пĕр суйлавçă ăнсăртран чирлесен, медицинăлă пулăшу илме пултарат. Суйлав литератури, кăранташ, хут кирлĕ пулсан, ăна та унтах илме пулат. Çийес тесен буфет пур.

П. Перлов.

Колоннă хыççăн колоннă...

Шупашкарти 14-мĕш суйлав участки умне пырсанах:—„Ыра сунса кĕтетпĕр“—тесе çырни куçа курăнса кайат. Участкă суйлавçăсене чăнахах та ыра сунса кĕтсе илет. Участкă Шупашкарти Калинин йачĕпе тăракан шкула вырнаçнă.

Декабĕрĕн 12-мĕшĕ. Хула халăхĕ ирех вăраннă. Акă 6 сехет çитес чух Чапайев посолки йенчен стройтехникумра вĕренекенсемпе служăшчисен пысăк колонни çĕнтерÿ йуррисене йанратса килет. Пурин аллинче те факелсем, çулпуççен сăнĕсем, хĕрлĕ йалавсем. Малти ретре байан çĕнĕ маршăн кĕввине шăрантарат. „Сывă пултăр пĕтĕм тĕнчери ĕçхалăхĕн çулпуçĕ Сталин йулташ!“, „Сывă пултăр Пĕтĕм-Сойузри Коммуниссен (боꙗшевиксен) партийĕ!“, „Пурте суйлава!“, „урра!“ кăшкăрнă сасасем пĕтĕм Чапайев поçолкипе Йарославски урама йанратаççĕ. Колоннă хыççăн колоннă суйлав участки патне пухăнаççĕ.

Суйлав çуртне кĕрсенех суйлавçăна ăшă кăмăлпа кĕтсе илекен сасăсем илтĕнеççĕ: „Суйлавçă йулташ, иртĕр малала, тумтирсене çакăр кунта“—тесе тăраççĕ дежурнăйсем.

Участкă çуртĕнче çутă, илемлĕ. Пур çĕрте те кандидатсен сăнĕсем, çулпуççен сăнĕсем йăлкăшса тăраççĕ. Пÿлĕмсенче дивансем, пукансем, ковйорсем сарса тухнă. Суйлав пÿлĕмĕсенче ченексем лартса тухнă. Сасăламали пÿлĕм пĕтĕмпе 12. Суйлавçăсене ваꙗꙗи канмали пÿлĕм, буфет, суйлавçăсен ачисене хăвармали пÿлĕм. Акă суйлавçă Никитина хăйĕн ачине ачасен пÿлĕмне хăварнă. Унта унăн ачине лайăх пăхаççĕ, печенисем, канфетсем çитереççĕ, вылꙗамали теттесем нумай. Амăшĕ суйланă хыççăн пырсан ачи унпа киле пыма килĕшмерĕ. Хăшĕсем макăрса тухса кайаççĕ.

Вуникĕ сехетре суйлавçăсем вaꙗꙗи Стройтехникумпа Калинин йулташ йачĕпе тăракан шкулти ачасем выступлени пачĕç. Суйлавçăсене Перловăпа Перман пионерсен „Матрос ташши“ питĕ кăмăла кайрĕ. 5 сехетре каллех пĕчĕк постановкă лартса пачĕç.

Участкăра куꙗтурлă-масаллă ĕçе çÿлĕ вырăна лартнă. Пур суйлавçă та хăйне кирлĕ пек канма пултарат. Суйлав участкин членĕсем пурте хулĕсем çине хĕрлĕ лентăсем çыхнă. Суйлавçăсене пурне те суйлав саккунĕ çинчен 3 кĕнеке, кандидатсен биографийĕсене укçасăрах параççĕ.

Участкă умĕнче автомобил, çунасем кунĕпех вĕçĕ-хĕррисĕр иртеççĕ. Суйлавçăсем пурте ĕмĕрне пулман ирĕклĕ праçнике хастарлă, савăнăçлă ирттерме тăрăшаççĕ. Суйлав участки нихăçан курман хаваслăхпа хăйĕн хăнисене—суйлавçисене кĕтса илсе, ăшшăн ăсатса йарат.

С. Воробйов.

Çак куна епĕр нумайранпа кĕтнĕ

ТРАК, 12/XII. (Телефон тăрăх). Суйлавçăсем суйлав участкисене пысăк хаваслăхпа пухăнаççĕ. Суйлав пункчĕсем вырнаçнă çуртсене пур çĕрте те хĕрлĕ йалавсемпе, лозунгсемпе, плакатсемпе, партипе правителствă руководителĕсен портретĕсемпе илемлетнĕ. Кашни суйлавçă хăй килĕ умне хĕрлĕ йалав тухса çакнă.

Нумай участкăсенче халăх 5 сехетрех пухăнса çитрĕ. Карайра суйлав йешчĕкĕ патне пуринчен малтан 82 çулхи колхозник Йегоров йулташ пычĕ.

— Çак куна епĕр нумай кĕтнĕ. Пайан кĕтнийĕ çитрĕ. Епĕ хамăн сасса аслă партишĕн, пирĕн пурнаçа лайăх сыхлакан çынсемшĕн патăм,—терĕ вăл.

Участкăсенче — йурă, музыкă, хаваслăх. Буфетсем ĕçлеççĕ. Трак участкинчи суйлавçăсем вaꙗꙗи чей хатĕрленĕ. Канмали пÿлĕмсенче патефонсем лартнă. Суйлавçăсем патефонпа Сталин, Молотов доклачĕсене итлеççĕ.

Ĕнер каçхине радио пур çĕрте суйлавçăсем радиопа Сталин йулташăн Мускаври Сталинский суйлав округĕнче тухса каланă сăмахне итлерĕç.

Закамский.

Çĕмĕрле ирех вăранчĕ

ÇĔМĔРЛЕ, 12/XII. (Телефонпа). Пайан Çĕмĕрле ирех вăранчĕ. Пилĕк сехетре урамра халăх уткалама тытăнчĕ. 6 сехет тĕлне участкăсене суйлавçăсем пырса тулчĕç. Хаваслă. Пĕрремĕш суйлавçă (3-ш участкăра) комбинатра ĕçлекен стахановкă Анна Чапрайева йулташ пулчĕ.

Пĕр сехет хушшинче виççĕмĕш участкăра 164 çын пырса суйланă. 12 сехет тĕлне, 6 сехет хушшинче, пĕтĕмпе 1.110 çын пырса суйланă. Пĕтĕмпе суйлавçăсем 1444 çын.

Хар—Лисин.

Кашнин сăн-питĕнче политикăла пысăк ĕç туни палăрат

КАНАШ, декабĕрĕн 12-мĕшĕ (Хамăр корр.). Канаш хулинче, тăван çĕршывăн ытти хулисемпе йалĕсенчи пекех, аслă уйав. Пур çĕрте те хĕрлĕ хăмачсем çине çырнă лозунгсем, плакатсем, çулпуçсен сăнĕсем.

Суйлав участкисен çурчĕсем çапçутă лараççĕ. Участкăсенчи суйлав комиçци членĕсем пурте пайанхи хаклă хăнасене, совет суйлавçисене, чаплăн кĕтсе илме хастарлăн хатĕрленчĕç. Тĕрĕссипе каласан, суйлав участкисем суйлавçăсене кĕтсе илме пурте—пилĕк участкинче те, ĕнер-висĕмкунах хатĕрленсе çитнĕ. Кунта уйрăманах 4-мĕш участкăна палăртма тивĕç. Кĕçĕн ватам шкула кĕрсен, чи малтанах Мускаври метрона кĕнĕ пек туйăнат. Тĕрлĕрен скуꙗптурăсем, мрамăр пек стенасем. Маларах кайсан, вăрман—икĕ йенĕпе хыр-чăрăш лартса тухнă.

Шăп 6 сехет. Суйлав комиççин секретарĕ хăйĕн вырăнне ларчĕ. Унăн умне суйлавçăсем пыра-пыра хăйсем камне пĕлтерекен документсем параççĕ те, виçшер бÿллетен тата пĕр конверт илсе, суйламали уйрăм пÿлĕме кайаççĕ. Унтан хаваслăн тухса, хăйсен конверчĕсене урнăна йараççĕ.

Суйлавçăсем хăйсен вăхăтне куꙗтурăлă ирттереççĕ. Кунта читаꙗнă. Хаçат-журналсем, шашкă-шахмăтсем, радио, патефон т. ыт. те пур. Кирлĕ пулсан, буфет. Ачалă суйлавçăсем вaꙗꙗи—ачасен пÿлĕмĕ. Ватă çынсем пур çĕрте те хисепре. Вĕсем тата инвалидсем вaꙗꙗи уйрăм лавсем.

Ирхине 6 сехетрен пуçласа кăнтăрлаччен суйлавçăсенчен çурри ытла хăйсен бÿллетенĕсене урнăсене йачĕç. Уйрăмăнах ватă суйлавçăсем çинчен каламала. Вĕсем çамрăкраххисенчен ирттерех тăрса 6 сехет çитиччченех суйлав участкисен çурчĕсене пычĕç. Пурте савăнаçлă. Кашни суйлавçăн сăн-питĕнче—пайан вăл политикăла пысăк ĕç туни палăрат.

Хула варринче хĕрлĕ хăмачсем çинче електричествă çутипе майлаштарса тунă лозунг йалкăшса тăрат:

— Пайан декабĕрĕн 12-мĕшĕнче ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали кун. Пурте суйлава!

М. Костин.

Пысăк хаваслăх

ЙĔПРЕÇ (хамăр корр.). „Çиçĕм“ колхозри суйлавçăсем суйлав кунне пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕç. Урамсенче йалавсем, йалавсем çинче Чкаловшăн, Спасовшăн, Коротковшăн сасăлама чĕнекен лозунгсем. Колхозри паллă стахановец П. Николайев пайан питех те хаваслă. Вăл суйлава 6 сехетре çитрĕ. Праçник тумĕпе тумланнă.

— Епĕ суйлава халиччен тăхăнман кĕпене тăхăнса килтĕм, тет Петĕрĕн арăмĕ Аꙗутă.

70 çулхи ватă кинемей Федорова Анастасийа та суйлава хаваслăн пычĕ. Праçникри пек тумланнă.

— Халĕ епĕ 70 çула çитнĕ пулсан та, хама ватă тесе шутлас килмест. Халĕ 20 çулхи хĕр пек туйăнат,—тет кинемей.

Пĕчченн хуçалăхпа пурăнакансем те суйлава праçник пек кĕтсе илчĕç. Йĕпреç йалĕнчи Карпов Тимофей хăйĕн çурчĕ çине хĕрлĕ йалав çакнă, пÿртне çуса тасатнă, суйлава кайиччен мунча кĕрсе тухнă. Карпов тутлă апат пĕçерсе çинĕ. Ирхи апатра чейпе кукăꙗ булкă, икерчĕ пулнă. Кăнтăрла вĕсем виçĕ блюдăран апат çийеççĕ Каçхине—пеꙗмен. Çакăн пек вĕсем кĕтсе илчĕç суйлав кунне.

Д. Михайлов. С. Цветков.

Савăнăçлă ир

Роза Люксембург урамĕнчи килхуçи хĕрарăмĕсем, темиçе кун малтан, декабĕрĕн 12-мĕш кунĕнче суйлав участкине пĕрле кайма палăртса хунă.

Вĕсем, пайан ир çутăличченех килĕсенчен туха-туха утрĕç. Килхуçи хĕрарăмĕсен ушкăнне Кириллова, Соколова, Маслова тата Селеꙗнова активискăсем суйлав участкине йертсе пычĕç. Ушкăна пĕрлешнĕ хĕрарăмĕсем 80-ран та ытла.

Килхуçи хĕрарăмĕсен колонни суйлав участки вырнаçнă кино-театр çурчĕ умне çитне çĕре, тата ытти урамсенчен те: музыкă училищинче вĕренекен студентсен, театр училищинче вĕренекенсен колоннисем тата типографинче ĕçлекен рабочисен ушкăнĕ çитсе чарăнчĕç. Вĕсене суйлав участкин председателĕ Суров тата председателĕн заместителĕ Степнов йулташсем кăмăллăн хирĕç тухса илчĕç.

Шăп 6 сехет çитсен суйлав комиçци ĕçлеме тытăнчĕ. Суйлав комиççин сĕтелĕ умĕнче ларакан урнăна пĕр суйлавçă хыççăн тепри шурă конверт ăшне чикнĕ бÿллетенсене йама пуçларĕç.

Кино кăтартакан залăра оркестр илемлĕ ташă кĕввисем шăрантарат. Çамрăк суйлавçăсем йурла-йурла ташлаççĕ. Уйрăманах музыкă училищинче вĕренекен çамрăк суйлавçăсем питĕ активлă та савăнăçлă.

Акă екран çинче вĕçĕмсĕр киножурналсем кăтартма пуçлаççĕ. Екран çине мĕн пур совет халăхĕ Аслă Совета суйлама депутата палăртнă пĕрремĕш кандидат, аслă çулпуç Сталин йулташ тухат. Суйлавçăсем хаваслăн алă çупса йараççĕ.

Пÿлĕмсенче шахмăт, шашкă, биллиард, кĕнекесем сутакан киоскă, буфет тата ыттисем те. Пур çĕрте те аслă та хисеплĕ кунăн хаваслăхĕ. Çак хаваслă суйлавçăсен ĕринче—йуратнă çулпуççăн, аслă Сталинăн йачĕ, унăн сывăх соратникĕсен йачĕсем. В. Андрейев.

Ĕмĕрте пулман уйав

ЙĔПРЕÇ, декабĕрĕн 12-мĕшĕ Хамăр корр.). „Тымар“ колхоз членĕсем Профсойузсен Пĕтĕм Сойузĕн Совечĕ чĕнсе каланине сÿтсейаврĕç. Вĕсем ку чĕнÿве пысăк хаваслăхпа ырласа хапăл турĕç. Пухува пынă çынсем декабĕрĕн 12-мĕшĕнче пурте пĕр çын пек харăсăн пыма пулчĕç.

Декабĕрĕн 12-мĕшĕнче ирхине ирех Михаил Лꙗовйев хăйĕн вунăча амăшĕ пулнă арăмĕпе суйлава çакăн пек тухса кайрĕ: ирхине 5 сехетре арăмне—Праскине, сасăлама çул çитнĕ ывăлне—Ивана, кинне—Йевдокине, хĕрне—Вăрăна ăшă йăйăхран вăратрĕ те, сĕтел йĕритавра ларса ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенин 7-мĕш пайне вуласа пачĕ. Малала Чкалов, Спасов, Коротков йулташсен автобиографине вуласа пачĕ.

— Епĕр вĕсемшĕн хамăр сасса памала, терĕ вăл. Çак хушăрах унăн арăмĕ Праски ирхи апат хатĕрлерĕ те. Ирхи апатра шурă кумачпа чей, çупа ăшаланă аш пулчĕ. Апат хыççăн пурте хăйсен колхозри суйлав участкине тухса утрĕç. Михаил ывăлĕ—Ваꙗă хуткупăс калат. Савăнăçлă вĕсем. 712 ĕçкунĕ—311 пăт тырă илнĕ вĕсем кăçал. Çĕнĕ пÿрт лартрĕ, ачисем вaꙗꙗи 5 тимĕр кроват, 10 венски пукан илнĕ. Пÿртре чечексем, занавескăсем, стенасем çинче лозунгсем, плакатсем, партипе правителствă çулпуçĕсен портречĕсем çакăнса тăраççĕ. Лꙗовйев Михаил государствă умĕнчи парăмсене пĕтĕмпех парса татнă. Вăрман хатĕрлев планне 117 процент тултарчĕ.

— Аслă Совета суйламали кун—манăн ĕмĕрте халиччен пулман праçник, уйав, тет—вăл.

Д. Михайлов. С. Цветков.

Е. Квасов суйлавçă—стройтрестри хуралçă кабинăна кĕме номĕр илет. Комиçци членĕ орденоносец Табаков йулташ ăна пушă кабинăна кĕме номер парат. (Шупашкар хулинчи 7-мĕш суйлав участки).

Цыганов фото-ÿкерчĕкĕ.

10-мĕш суйлав участки

Ирхине, пилĕк сехет иртсен, Пичет çурчĕн хĕрлĕ кĕтесне халăх пухăна пуçларĕ. Суйлав комиçци суйлавçăсем сасă пама тытăначчен организацилĕ ĕçсене туса петерчĕ. Суйлав йешчĕкне тĕрĕслесе тухса, сургучласа питĕрсе хучĕ.

Вăхăт 6 сехет çитрĕ. Участкăри суйлав комиçци председателĕ Зимин йулташ хаꙗ сасă пама тытăнатпăр, тесе пĕлтерчĕ. Суйлавçăсем секретар ларакан сĕтел патнеле туртăна пуçларĕç. Суйлавçăсем пĕрин хыççăн тепри йĕркипе бÿллетенсем чикнĕ конвертсене урнă ăшне йама тытăнчĕç. Малтанхи конверта Чăвашсен государствă педагогика институтĕнчи партком секретарĕ Гермогенов йулташ урнă ăшне йачĕ.

Суйлавçăсем сасăлама пысăк хаваслăхпа пыраççĕ. Кашни суйлавçă тенĕ пекех уйав чухнехи пек хитре çыпăçулă тумланнă.

Участкăра ваттисене тата суйлава пыма пултарайман çынсене сасă пама илсе çÿрессипе икĕ автомашинă ĕçлерĕç.

Суйлава пыракансем вaꙗꙗи буфет, кĕнеке сутти, патефон итлессине тата тĕрлĕрен вăйăсем организациленĕ.

Çавăн пекех участкăра ачасен пÿлĕмĕ тата дежурнăй врач пулнă.

Лукойанов.

Ватă колхозницă пуринчен малтан сасăларĕ

ВĂРМАР, 12 (Телефон тăрăх). Вăрмар уйаври пек тумланнă. Клуб çурчĕ хĕрлĕ йалавсемпе, електричествă çутипе капăрланнă. Кунта суйлав комиçци 5 сехетрех ĕçе тытăннă. Суйлавçăсем те ирхине пилĕкрех пуçтарăнма пуçларĕç Шăп 6 сехетре суйлав йешчĕкне пичетлесе хурсан, суйлав комиççин председателĕ Филиппов йулташ суйлав пуçланни çинчен пĕлтерет. Чăн малтан суйлава 73 çулхи колхозницă Степанова Марийа кĕрет. Вăл колхоз кенекине кăтартса, бÿллетенсем илет те, сасăламали пĕрремĕш пÿлĕме кĕрет.

Суйлава умлă-хыçлăн рабочисем, колхозниксем, служăшчисем килеççĕ.

„Заготзерно“ коꙗухĕ Афанасйев йулташ, хăйĕн лайăх ĕçĕшĕн темиçе хут премиленĕскер, сасăласа тухнă хыççăн, çапла каларĕ:

— Епĕ 52 çула çитсе пайанхи пек пысăк праçник курман. Елĕк епĕр кун пек суйлавсем çинчен шухăшлама та пултарайман. Сталинла Конституци тăрăх, пирĕн боꙗшевиксен аслă партийĕ чĕнсе каланине пĕтĕм чĕрепе йышанса, епĕ аслă партишĕн, коммуниссемпе партире тăманнисем пĕрле тăратнă кандидатсемшĕн сасăларăм. Епĕр, ĕçхресченĕсем, парти сăмахне йаланах итлесе, пурнăçа кĕртсе пырса, телейлĕ пурнăç турăмăр.

Клубра савăнăçлă. Мĕн пур йенчен музыкă йанарат. Кунта патефон, гармоꙗ, биллиард пур. Буфет ĕçлет. Хăйсем тĕллĕн утса килеймен суйлавçăсем вaꙗꙗи икĕ автомашинă уйăрнă.

Ф. Ситта

9-мĕш участкă сасăлат

Тăххăрĕмĕш участкăри суйлав комиçци председателĕ Вишневский йулташ участкăна чи малтан çитрĕ. Вăл халĕ участкăри йĕркелĕхе тепĕр хут тĕрĕслесе тухрĕ.

Ултăмĕш сехетре суйлавçăсем пухăнма пуçларĕç. Кашнин чĕри Сталин ĕçĕшĕн, социалисăмшăн шанчăклăн та çине тăрса кĕрешекенсемшĕн сасăлас ĕмĕтпе тулнă. Кашнин чĕри хăйĕн Аслă Совета суйланă çĕре хутшăнас тивĕçне пурнăçа кĕртес хĕрÿлĕхпе тапат. Кашни хăйĕн сассине коммуниссемпе партире тăманнисем пĕрле тăратнă кандидатсемшĕн парассине пĕлет. Çавăнпа вăл кунта ирех хăйĕн тивĕçне пама килнĕ.

Оркестр музыкă вылꙗат. Канмали тата ача-пăча, врач пÿлĕмĕсем. Канмали пÿлĕмсенче хаçат-журналсем, кĕнекесем, биллиард, шашкă-шахмăт, домино, патефон. Ытла та хаваслă. Çаксене куратăн та хăвăн тивĕçна хăвăртрах ĕçхалăхĕн тата хаваслă та телейлĕ пурнăçĕшĕн тăрăшакансене парас килет.

Пилĕк сехет те 45 минутра дежурнăйсем хăйсен вырăнĕсене тăчĕç. Вĕсем кашни суйлавçăна мĕн кирлине тупса пама, хăшпĕр ыйтусем çине ответсем пама тăрăшаççĕ.

Пилĕк сехет те 55 минутра суйлав комиççийĕ суйлав урни патне пырат. Комиççи 6 сехет тĕлĕнче урнăна тĕрĕслесе пичетлесе хурат. Унтан суйлав комиççи председателĕ суйлавçăсем патне анат. Вăл суйлавçăсене суйлав пуçланни çинчен пĕлтерет. Оркестр „Интернационал“ вылꙗат.

Суйлавçăсем суйлав Положенин 75-мĕш статйи тăрăх сасă пама пуçларĕç.

Хĕрлĕ йалавсемпе пычĕç

ШАККĂЛ (Шупашкар р.) декабĕрĕн 12-мĕш (Телефон тăрăх). Пайан йал илемлĕ тумпа тумланнă. Кашни кил çумĕнче хĕрлĕ йалав вĕлкĕшет. Плакатсем çакнă. Участкăна кĕрекен йалсенчен ушкăнăн-ушкăнăн пухăнса хĕрлĕ йалавсемпе килчĕç. Ватă карчăксене, стариксене колхозсенче йатарласа уйăрнă лашасемпе илсе килчĕç. Лаша çилхисене хĕрлĕ лентăсемпе илемлетнĕ.

Шăп 6 сехетре суйлав пуçланчĕ. Суйлавçăсен вăхăтне усăлă ирттерме хаçат-журналсем, шашка-шахмăт, домино, биллиард пур. Буфет ĕçлет.

Суйлавçăсен хаваслăхĕ пысăк. Кашни суйлавçă хăйĕн суйлав тивĕçлĕхне хăйĕншĕн ĕçлекенсемшĕн парат.

Суйлав комиççи председателĕ П. Тавинов.

1938 çулхи выльăх-чĕрлĕх переписĕ мĕнле пулса иртмеле

ССР Союзĕ Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1937 çулхи ноябрĕн 9 мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх пĕтĕм Совет Союзĕпе 1938 çулхи январĕн 1-мĕшне выльăх-чĕрлĕх хисепĕ мĕн чухлĕ пулнине çырса тухмала.

Çав постановлени тăрăх Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1937 çулхи декабрĕн 1-мĕшĕнче уйрăм постановлени йышăнса, 1938 çулхи выльăх-чĕрлĕх переписĕ мĕнле пулса иртмелине кăтартса пачĕ.

Перепис халăх хуçалăх учочĕн Управленийĕ урлă пулса иртмеле. Переписре совхозсен, государствăлă тата кооперативлă хуçалăхсен, колхозсен, колхозниксен, единоличниксен, рабочисемпе служащисен аллинче тăракан выльăхсене—майракалă шултра выльăхсене, сурăхсемпе качакасене, сыснасене тата лашасене пурне те çырса тухмала. Выльăх-чĕрлĕх хисепĕ мĕн чухлĕ пулнине перепис пит тĕрĕс кăтартмала. Çав шутпа перепис пулса иртнĕ хыççăн 2—3 кун хушшинче переписре пулнă хуçалăхсенчи выльăхсене 10 процентран кайă мар тепĕр хут тĕрĕслесе тухмала.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ выльăх-чĕрлĕх переписне иртерме çакăн пек срукусем йышăнчĕ:

„а) совхозсенче, государствăлă тата кооперативлă ытти хуçалăхсенче—1938 çулхи январĕн 1-мĕшне 5-мĕш хушшинче;

б) мĕн пур колхозсенче, колхозниксен, единоличниксен, рабочисемпе служащисен хуçалăхĕсенче, ялсемпе хуласенче, хула йĕвĕр посолоксенче—1938 çулхи январĕн 1-мĕшпе 8-мĕш хушшинче".

Перепис пуçланиччен—январĕн 1-мĕшне çитиччен тивĕçлĕ организацисен пурин те (совхоз директорĕсен, государствăлă ие коопе-ративлă хуçалăх руководительсен) выльăх-чĕрлĕхсене инвентаризаци туса çитермеле.

Выльăх-чĕрлĕх переписне иртерме райĕçтăвкомсене, хула тата ялсовечĕсене, çавăн пекех тата хула йĕвĕр посолок совечĕсене çак ĕçсене тума хушнă:

„а) выльăх-чĕрлĕхсене çырса тухас ĕçе—перепис пахалăхĕпе задачисем çинчен халăх хушшинче массăлăн ăнлантарса парса тата выльăх-чĕрлĕх хисепне кăтартакан цифрăсемшĕн таткăлăн кĕрешмелле;

б) перепис иртернĕ чухне регистраторсем пулса ĕçлеме политикă йĕнчен тĕрĕслене тата техникăна лайăх пĕлекен çынсене кирлĕ таран уйăрмала;

в) выльăх-чĕрлĕх переписне иртернĕ вăхăтра халăх-хуçалăх учочĕн районри инспектурине пулăшма районри актив шутĕнчен квалификациллĕ çынсене мобилизацилемеле, вăл çынсене райĕçтăвком уполномоченнăйĕсем пулса ĕçлеме тата выльăх-чĕрлĕх переписĕнче кăтартнисене контроллĕ тĕрĕслĕ тăвакан бригадирсем пулса ĕçлеме 2—3 ялсовечĕ пĕр çынтан кайă мар памала;

г) выльăх-чĕрлĕхсене çырса тухма йăвăртарнă работниксене пĕтĕм ĕçе туса пĕтерличчен çав ĕçрех çирĕплетсе хăвармала, вĕсене урăх нимĕнле ĕç те хушмала мар;

д) перепис иртернĕ вăхăтра перепис работникĕсене район тăрăх куçса çÿреме мĕн кирлине тупса памала".

Перепис выльăхсем куç умĕнче мĕн чухлĕ пуррине регистратор хăй пăхса шутланипе пулса иртмелле. Выльăх-чĕрлĕхсене çырса тухассине тĕрĕс мар иртерсе, çавăн пекех тата перепиçе хирĕç тăрса йе выльăх-чĕрлĕхсене пытарса хăварнине айăпа кĕнĕ çынсене уголовнăй йĕркепе ответ тыттарасçĕ.

Хăйсен обязательствисене пурнăçа кĕртрĕç

ÇĔМЕРЛЕ (Хамăр корр.). „Труженик" заводри рабочисем хăйсен çуллăх умĕнхи канашлăвĕсенче çулталăкри промфинплана декабрĕн 12-мĕшне тултарма обязательства илнĕччĕ.

Рабочисем хăйсем илнĕ обязательствăна пурнăçларĕç. Декабрĕр пуçламăшне çулталăкри плана 100,4 процент тултарчĕç. Çав çитĕнÿе стахановла ĕçлеме пуçлакан куллен сарса, вăйлатса пынипе тунă.

Кăçал завод çĕнĕрен строгальнăй цех туса лартрĕ, стружкăна фанерă цехĕсене те аслатса йÿсарĕ. Рабочисене вальци çĕнĕрен пĕр çурт тунă. Çавсем те плана хăвăртăн тултарма пулăшнă. Иртнĕ çулхипе танлаштарсан пурнăç условийĕ чылай лайăхланнă. Чи лайăх стахановецсем уйрăм çуртсенче, ялтарласа тунă хваттерсенче пурăнаççĕ. Вĕсене вырăн, тавраш тем, пукансем, сĕтел панă, радио кĕртнĕ.

Пĕр-икĕ çул каялла завода ахаль рабочине килсе кĕнисем, халĕ квалификацилле рабочи-стахановецсем пулчĕç. Акă, çамрăк, Иван Петрович Иван Николаевич йулташсене ик идер. Вĕсем иккĕшĕ те малтанхи вăхăтра ахаль ĕçсенче ĕçлерĕ, кайран станок çинче куçнă. Халĕ иккĕшĕ те фанернăй цехра лущильщикра ĕçлеççĕ. Кунне вĕсен 624 штук фанерă листи касмала пулсан, вĕсем 1.600 штук таран касса, плана 256 процент тултараççĕ.

Сортировщиксемпе клейщиксем те ĕçре паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Фанерă листисене сулласа тăракан Татьяна Яковлева йулташ кашни куллен нормăна 200 процент тултарса ĕçлет. Ноябрĕр уйăх планне вăл 167 процент тултарнă.

„Труженик" завод ССР Союзĕн Аслă Советне суйламалли куна çеç мĕн çĕнтерÿсем тунипе кĕтсе илес тесе, ноябрĕн 20-мĕшпе декабрĕн 12-мĕш хушшинче стахановла рекордсен сталинла çирĕмкунлăхне иртерчĕ.

Фанерă тăвакан цехри Смирнов йулташ смени хăй çине илнĕ обязательствăна декабрĕн 8-мĕшне тултарчĕ. Халĕ вăл планран ыт лашши тата 2500 штук фанерă листи туса кăларма пулчĕ. Сменă кашни кунхи плана 150 процентран кайа тултармасть. Акă декабрĕн 4-мĕшĕнче 1.669 штук листа туса кăларса, нормăна 267 проц. тултарнă.

Столярно-мебельнăй цех стахановла рекордсен сталинла çирĕмкунлăхĕнче 32 690 тенкелĕх продукци туса кăларма обязательство илнĕччĕ. Рабочисем обязательствăна пурнăçларĕç. Максур Кулейев, Миронов, Тарлышкина станочниксем кашнах нормăна тултараççĕ. Акă Хайков комсомолец (вăл диван тунă çĕрте ĕçлет) иртнĕ уйăх планне 240 процент тултарнă, халĕ 300 проц. тултарать.

Хар. Лисин.

Акушеркăсем çинчен

Акушеркă майăр катăт. Майăр пулнă мей такам та çийет ĕнтĕ кăçал майăр. Анчах Кивĕ-Ейпеçри (Турхан районĕ) Данилова акушерка пек ĕç вăхăтĕнче майăр катса ларни тем тесен те килĕшмест. Килĕшмест, мĕншĕн тесен ĕçĕ унăн пурнинчен ытла майăр çисе иртет. Вăл чăнах та çавăн пек иккенне пĕлме килĕсем тăрăх кайатпăр.

Акă Йевграфова Акулина. Телей пулнă ăна кăçал—ача суратнă.

— Ачине пит лайăх пăхатăп, кăшт йĕрсенех чĕчĕ паратăп,—тет. Ачана кунне миçе ĕмертмелине пĕлмест. Çавăн пекех хальç суралнă ачине сикекен чирле чирленĕ тенĕ ачине йунашар выртарнă.

Ситетпĕр Качайкина Варвара патне. Ноябрĕрен 23-мĕшĕнче çамăллайнă вăл.

— Йăвăр пулчи суратма, инке?
— Йăвăр пулчĕ, питĕ йăвăр, пĕр ачи кутăн килчĕ те...
— Акушеркă пулăшаймари мĕн?
— Икĕ хут чĕнтертĕмĕр, кивора пулнă иккен, акăш-макăш, килмерĕ.

Çапла Качайкина йалта акушеркă пур çинчех йĕкĕрĕш ачана пĕччен асапланса суратнă.

Тасалăх енĕр пăхса çÿренĕ килсенче çитмест. Çитменни çине ачасене таса шурă пелюнкăпа мар, краскăлă тутăрсемпе чĕркесе усраççĕ. Тĕлĕнмелли те çук ĕнтĕ унран. Акушеркă йывăр çын пулна хĕрарăмсене пĕрре те пухса ăнлантарса, лекци вуласа паман, килĕсенчи тасалăхне те тĕрĕслемен. Çавнашкалах, Нăрваш-Шăхалĕнчи акушеркă та. Вăл Данилова промкасса хверша тан илнĕ май (Данилова промкасса хвершальтан илтĕ тÿлет) вĕсемпĕр майăр катса çÿремест, анчах ĕçĕ пурĕ пĕрех пĕрешкел. Йăвăр çын пулнă хĕрарăмсем ăна пĕр йалта пулсан та кам патĕнче пуранние пĕлмеççĕ. Тасалаха тĕрĕслемест, трахом та сыватмаст.

Совет влаçĕ акушеркăсем çине пĕлĕç шанса парат. Анчах Турхан районĕнчи хăшпĕр акушеркăсем пайанхи кун ăна тивĕçлĕн пурнăçламаççĕ. Районра ачапа амăшĕсене сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен инструктор та, сывлăх пайĕ те пур. Вĕсем тĕрĕслемеççĕ, вĕрентмеççĕ.

Акушеркăсен ача кăна сураттармала мар, унтан ытларах амăшĕсем хушшинче профилактика ĕçне туса пымала.

К. Пайраш.

Пирĕн чикĕ çирĕп хуралçăсен аллинче. (Союзфото)

Вăрманта шпион тытнă

Çурçĕр-хĕвеланăç чикки, декабрĕн 4-мĕш. Пограничник Долгих йулташ хуралта тăнă. Вăл вăрманăн кăнтăр хĕррипе айаккала вĕтĕр пăхса утнă. Сасартăк вăл туратсем хуллен çатăртатнине илтнĕ. Боец сыхăланнă.

Йăвăçсем хушшине пĕр ватă çын хулпуççи çинче пĕр çыхă çатрака çĕклесе утса пынă. Темиçе утăм утсан, вăл сасартăк чарăнса çатракине пăрахнă та тункатă çине ларнă. Унтан, айаккала пăхкаласа илсе атă кунчинчен хулăм пакет кăларнă, ăна васкасах йуман хăвалĕ ăшне чикме тытăннă.

— Стой, руки вверх!—хытă кăшкăрнă пограничник.

Ватă çын, пограничник командине илтмен пек пулса çатрака çыххине пĕр васкамасăр хулпуççи çине хунă та аллине кăсăйне чикнĕ. Долгих йулташ асăрхаттармала пăшалтан сывлăша пенĕ те иккĕмĕш хут команда панă.

— Не шевелись!

Долгих йулташ йуман хăвăлĕнчен пакета илнĕ те тытса чарнă çынна заставăна ăсатнă. Заставăра тĕрĕслесе пăхнă. Пакетра шпионла сведенисем пулнă. „Ватă çынăн" кăсăйинче ухтарнă хыççăн браунинг тупнă. Ку вăл ватă çын пулман, ватă пек курăнма хăйне хăй гримланă (сухал тăхăннă) çеç. Вăл пĕр йутçĕршывăн чи пысăк шпионĕ пулнă.

(ТАСС).

„Ленин Октябрĕрте" фильма екран çинĕ массăлăн кăлараççĕ

Кинематографин Тĕп Управленийĕ Октябрĕрти Социализмла аслă революци çирĕм çул тултарнă кунсенче „Ленин Октябрĕрте" ятлă саслă илемлĕ фильмăна кăтартнă. Ку фильмăна халăх хĕрÿллĕ кĕтсе илнĕ. ССР Союзĕн халăх артисчĕ Б. В. Щукин ку фильмăра Владимир Ильич Ленинăн чаплă сăнне кăтартнă.

Пĕрремĕш хут пăхнă хыççăн фильмăна тата çĕнĕ епизодсем, уйрăмах Зимний Дворецa штурмланă тата Вăхăтлăх правительствăна арĕсленĕ сценăсене хушса ÿкерме йышăннă. Картинăра вылякан коллектив ку задачăна ăнăçлăн пурнăçланă.

Декабрĕн 12-мĕшĕнче—ССР Союзĕн Аслă Советне суйламалли кун—„Ленин Октябрĕрте" фильмăна Мускаври вунă чи лайăх театрĕсенче, Ленинградри, Киеври, Минскри, Харьковри, Калининри тата ытти хуласенчи театрсенче кăтартнă. Декабрĕр уйăхĕ пĕтиччен ку фильмăна 400 екземпляр кăларасçĕ.

Фильмăн калаçман вариантне те ÿкерсе çитересçĕ. Вăл декабрĕн 15-мĕшне хатĕр пулат. Январь уйăхĕ пуçланнă тĕле фильм 500 копипе Совет Союзĕн пĕтĕм кĕтесĕсенчех кăтартмала пултăр тесе ĕçлеççĕ.

Çитес çул Владимир Ильич Ленинăн Совет влаçĕ пуçланнă çулсенчи пурнăçĕпе ĕçĕсене сутатса иккĕмĕш фильм ÿкерме палăртаççĕ.

(ТАСС).

Китайри вăрçă

Нанкина кайакан çулсем çинче хаяр çапăçусем пыраççĕ. Кăнтăр-хĕвелтухăçĕнчен тапăнса малта пыракан Йапонин чаçĕсем Нанкинран инçе мар тăраççĕ. Çитес кунсенчех йапонецсем хула çине чăннипех тапăнасса кĕтеççĕ.

Нанкин районĕнче китаецсем Йапонин çарĕсенчен таткăлă сыхланма пысăк ĕçсем тăваççĕ.

Йапони флочĕ Цзян—Ин форчĕсенчен Йанцзы йуханшывĕ тăрăх халĕ те Нанкина татса тухаймасть, мĕншĕн тесен китаецсем Цзян—Ин патĕнчи çула пĕтсе лартнă тата минăсем хурса тухнă.

Декабрĕн 6-мĕшĕнче йапонецсем Уху хули çине (Нанкинран 90 километрта Кăнтăр-хĕвеланăçĕнелрех) тискеррĕн бомбăсем пăрахнă. Тарас тесе пăрахут çине ларма кĕтекенсем т. ыт. те пин çын ытла вилнĕ. Нумай халăх шыва путнă.

Классиксен ĕçĕпе тата пурнăçĕпе паллашаççĕ

УЛАТĂР. Художествăпа гравюра училищинчи пĕтĕм студентсен пĕрлехи пухуйĕнче час-часах вырăссен аслă художникĕсен ĕçĕсем тата пурнăçĕсем çинчен лекцисем пулаççĕ. Ку таранччен Репин, Суриков, Серов, Рембрандт классиксем çинчен лекцисем илтнĕ.

Студентсем аслă классиксен ĕçĕсемпе хытă интересленеççĕ.

Марков.

Хĕрлĕ çарта савăнса пурăнатпăр

№-лĕ стрелковăй полкăн çыхăну звонĕнче чăваш красноармейсем чылай. Çар техникине тата политикăна веренес тĕлĕшпе епĕр пысăк çитĕнÿсем турăмăр.

Канăçла сехетсенче вăхăта питĕ савăнăçлăн пурăнса иртеретпĕр. Час-часах харпăрăхăй пултарулăх вечерĕсем тăватпăр. Çав вечерсенче чăваш ачисем ташласа-йурласа панисене пурте хапăл туса йышăнаççĕ.

Красноармеец Г. Йегоров. Белоруссия.

Çуралакансен йышĕ ÿсет

1936-мĕш çулта, 11 уйăх хушшинче Çĕмĕрле хулинче 420 ача çуралнă.

Кăçал çуралакансен шучĕ чылай ÿсни курăнат. Кăçал, 1937-мĕш çулта, 11 уйăх хушшинче 675 ача çуралнă. Уралхла каласан, Çĕмĕрлере кăçалхи çулта кашни кун 2 ача ытларах çуралнă.

(Хамăр инфор.).

Çĕнĕ лавкка

ÇĔРПÿ. Шĕнер йалĕнчи ку таранччен 7 йалта лавкка пулнă. Çулла вăхăтĕнче ĕçлеме Йĕкĕрвар йалсовечĕ кĕрекен Славаш йалне çĕнĕрен тепĕр лавкка уçрĕç.

И. Михайлов.

Культура йапалисем

КУСЛАВККА. Тĕрлемĕс йалĕнчи колхозниксен пурнăçĕ 20 çул хушшинче калама çук нумай улшăнчĕ. Ĕлĕк пирĕн йалта 12 хура пÿрт пулнă. Хальхи вĕсем вырăнне пысăк та çутă пÿртсем шăтса ларчĕç. Пÿрт ăшчиккисем культурăланчĕç. Пайанхи куна 10 колхозник килĕнче радио кĕрлесе ларат. Пĕтĕм йалĕпе илсен 1522 штук чечек, 121 штук умывальник, 253 сехет, 136 самовар, 205 штук тĕкĕр, 121 календар, 49 штук музыкă инструменчĕ пур. Çак йапаласем ĕлĕк пулманпа пĕрех, йе пулсан та вĕсене хăшпĕр пуянсем çеç тытнă.

И. Харитонов.

Колхоз театрĕ колхозсенче

Сĕнтĕрвăррингчи 1-мĕш колхоз театрĕ Биль—Белоцерковскин „Пограничниксем" ятлă пйесĕне выльса пама ноябрĕн 18-мĕшĕнче Сĕнтĕрвăрри, Вăрмар, Куславкка районĕсенчи колхозсене тухса кайрĕ.

Куславкка районĕнчи Карач йалĕнчи клуба 500 çын пынă. Колхозникĕсем „Пограничниксем" пйесăна питĕ йуратса пăхрĕç.

И. Николайев.

Спорт хатĕрĕсем

Хĕле кĕтĕмĕр. Мĕлăун-мĕлаун совет çамракĕсем йĕлтĕрсем çине тăрса, урисене конькисем çырса уйăхсене, катоксем çине тухасçĕ.

Шупашкарти „Динамо" магазинĕ, хĕлхи спорта вăйлатас тесе, спорт хатĕрĕсем чылай ılса килнĕ. Тĕслĕхрен йĕлтĕрсем (ача-пăчасем, хĕрарăмсем т. ыт. валлин) — 2 пин мăшăр, конькисем—750 мăшăр, сунашкасем — 300 штук, хоккей клюшкисем—200 мăшăр т. ыт. Кусемпĕр пуçне тата йĕлтĕр патакисем, йĕлтĕр резинисем, мазсем, коньки пластинкисемпе усисем, йĕлтĕре ура çумне çирĕплетсе лартмалли хатĕрсем сителĕклĕ илсе килнĕ.

Килмен те курман... Упамсана

Упамсара 700 çын пуçне пĕр трахомпункт пур. Анчах мĕнле ĕçлет вăл?

Пĕчĕк пÿлĕм. Йалсовет çуртĕнчех вырнаçтарнă ăна. Кĕретпĕр, сывлăх шăрши кĕни туйăнмаст. Емелĕсем уçă, картăчкисем пăтранса кайнă. Трахомлисем шкулта 63 ачаран 23, йалта 71.

— Кăçал миçе çын сыватнă?—ыйтатпăр Савелйева трахсестрăран.
— Тăваттă.
— Камсем вĕсем?
— Василйев Иван.., Арланов Филимон.., ыттисем...
Кайатпăр килсем тăрăх.
— Каласа пар-ха, Василйев йулташ, мĕнле, сыватăн-и трахомран?
— Мĕн калатăр есĕр, трахом ниххçан та пулман манăн, çÿремен те епĕ сывалма.
Йурĕ. Арланова шыраса тупатпăр.
— Есĕ, Арланов йулташ, трахомран сывалнă, тет.
— Кам калат? Пăхăр куçа, ниххçан та пулман мăн таврашра трахом.

Пăхатпăр—трахом чăнах та пулман, халĕ те çук. А отчот çинче—„сывалнă" тесе çырнă, ăна райсыхлăх пайĕ те, Сывлăх комиссариачĕ те ĕненет. Ĕненеççĕ анчах мар, сводкă çине те кĕртсе çирĕплетеççĕ.

— Тасалăха мĕнле тĕрĕслетĕр, уйрăм алшăлисем пур-и?
— Октябрĕр уйăхĕнче пăхнă... 27-мĕш чиеларă пулас...

Анчах колхоз председателĕнчен ыйтсассăн, вăл:—Пăхман,—тет. Савалйева „вăл килте пулман унчух" тесе шантарат. Кĕретпĕр килте ларакан карчăк патне.

— Ну, инке, килтех ларатăн-и мĕн есĕ?
— Ара килтех пулмасăр, ман пек карчăкăн ăçта кайас.
— Урайне çăвайман вара есĕ, тасалăха пăхса çÿремеççĕ-и мĕн?
— Çук, пирĕн йалта ниххçан та курман ун пек пăхса çÿренине.

Малала колхоз правленине çитетпĕр. Йĕрм-тавра тасамарлăх, килĕ хушшине çулларанпа пустарман, хальх пĕтĕм тислĕк йур айне пулнă. Шалта чĕлĕм тĕтĕмĕ йалсовет канцелярийĕнчен нумай ытларах. Мĕн вăл тепĕр тесен тасалăх? Шутламан та вĕсем ун çинчен. Вĕсем кăна мар, йалсовечĕ хăй те шутламасть. Трахсестре отчотне халиччен итлемен, тракома миçе çын чирлине тем пулсан та пĕлмеççĕ. Трахсестра ăна пурнăçĕ пушшех наянланса кайнă. Пасара кайса прогулсем тунă, пункта вăхăтра çÿремен. Мĕн мар пурнăç! Трахсестрана ĕçлемесĕрех укса тÿлеççĕ Упамсара.

Аслă Совета суйламали куна кашни колхоз, кашни килĕ праçник чухнехи пек тасалахпа кĕтсе илмеле. Ун çинчен илтмен-ха Упамсара.

Йăла районисем те, шупашкартисем те нихăçан та килсе курман.

Ку йапала йĕртсе пыракан организацисене тивĕçлине шутлаттарма кирлĕ. Ку пире сводкă тăрăх ĕçлесцине пăрахăçа кăларма хушат. Йалсене ытларах тухса çÿремеле, тухсан чей ĕçнипех çаврăнса каймалла мар, мĕн пур „вак" ыйтусене тĕпчесе пĕлмеле, тивĕçлĕ кăтартусем парса хăвармалла. Тухса çÿреме çынсем çитмеççĕ мар, районра та, республикăра та нумай вĕсем.

К. Пайраш.

Лашасене йапăх пăхаççĕ

Чăрăш сырмари „Коминтерн" колхозра (Вăрмар районĕ) хĕлле выльăх лаша витисене йусаса хатĕрлемен. Витесенче мачиасем çук, темиçе çĕртен йур кĕрсех тăрат. Çамрăк тыхасене уйрăм пÿлĕмсем туса паман, вĕсене пурне те пĕр çĕрте хупса усраççĕ. Кормушкăсем çуккипе тыхасене апат урайне пăрахса çитереççĕ. Çавăнпа та апат нумай сайа кайат. Йал сывăхĕнчи утă капанĕсене сыхламан, выльăх сене çитерсе йанă.

Лаша тавраш ĕсене килрен салатса пĕтерние чылайĕ ашне сухатнă. Тăваттăмĕш бригадăн 10 лаша пуçне 7 хамăт, 6 йĕвен, 5 тилхепе анчах йулнă. Суракине йеплле иртерес çинчен шухашламаççĕ те.

В. Вишневский.

ИЗВЕЩЕНИЕ

Нижеследующие товарищи вызываются в Партколлегию при Уполномоченном КПК при ЦК ВКП(б) по Чувашской АССР в гор. Чебоксары (ул. Плеханова, д. № 7) к 10 часам утра:

15 декабря

1. Иванов П. И. — гор. Чебоксары.
2. Назаров А. К. — Тоже.
3. Лаптев П. А. — Шемуршинский район.
4. Краснопевцев И. Ф. — Козловский район.
5. Румянцев Ф. Ф. — Батыревский район.
6. Иритков А. С. — Тоже.
7. Моисеев М. Ф. — Канашский район.
8. Алексеев П. А. — Вурнары, Советская, 31.
9. Мукшин М. З. — Канашский район.

17 декабря

1. Малинов П. И. — с. Тятилово Татаркасинского района.
2. Рунгин П. А. — г. Чебоксары.
3. Иванова А. А. — с. Яндобы Аликовского района.
4. Туймедов Д. М. — Урмарский район.
5. Григорьев С. Г. — Тоже.
6. Белов Г. Т. — Тоже.
7. Сехов А. П. — Порецкий район.
8. Гуляев В. И. — Вурнарский район.
9. Ванерке Е. Д. — Шихазанский район.

Райкомам ВКП(б) просьба обеспечить явку вышеуказанных товарищей и выслать своих представителей.

Партколлегия.

Ответлă редактăр заместителĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

Тимĕрçсене татахусалăхсенче усă курма шиналăх тăрăх тимĕр СУТЛĂХ ПУР

30—35 тонна таран пулат. Çак адреспе ыйтмала: Шупашкар хули, Красноармейская урамĕ № 5. Телефон № 3—62 „Спотара" Чăваш кантурĕ. Канашри тата Çĕмĕрлери „Спотара" уйрăмĕсене ыйтса пĕлме тата тимĕр мĕнлине курма пулат. „СПОТАРА".

2—1

ДЕКАБРĔН 13-мĕшĕнче КАНАШРА тата ДЕКАБРĔН 15-мĕшĕнче ШУПАШКАРТА ГОРЬКИРИ ПРОТЕЗ КОМИССИЙĔ çĕнĕрен протезсем тума заказсем йышăнас тĕлĕшпе тата малта заказ панисене вися пăхас тĕлĕшпе ĔÇЛЕТ

Протезсем тутарас текен инвалидсен Протез Комиссийĕ ĕçлекен вырăнсене асăннă сроксенче пымала.

Чăваш АССР Социаллă пулăшу халăх комиссариачĕ.

Декабрĕн 13-мĕшĕнчен пуçласа ШУПАШКАРТИ КИНО-ТЕАТРТА ПĂХĂР ТАТА ИТЛĔР!! Историлĕ, саслă, çĕнĕ фильм ПУГАЧЕВ СЕАНССЕМ кăçхине 6, 8, тата 10 сехетсенче пуçланаççĕ. Насçă 1 сехетрен усă. Билетсене малтан илсе хума пулат. ДИРЕКЦИ.

„Чăваш Коммуни" çырăнса илмелли хаксем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене каялла памаççĕ.

Уполномоченнăй Чувашглавлита № 950 Гор. Чебоксары, Типография М З Чувашполиграфтреста. Заказ № 2601. Тираж 13790. 59—92 см. 1—1 п. л.